*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

ХЫПАР

# ХРЕСЧЕН САССИ

ЮНКУН

87 (2499) [1]
Хакĕ ирĕклĕ
Эрнере икĕ хут тухать

1991 çулхи апрелĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

2014,
ноябрь/чӳк, 12

ПУРНĂÇ ТАППИ

# Мал шухăш малах турттăр

**"Ăна ĕçлеме çăмăлрах. Тăванĕ ав мĕнле пулăшать", – теме пултарĕç Шелттем (Канаш районĕ) ял тăрăхĕн пуçлăхĕ çинчен сăмах хускатсан. "Епле çăмăл пултăр-ха? Шелттем хула çывăхĕнче вырнаçман. Çамрăксене укçа-тенкĕ енчен çĕнĕ пурнăç пуçлама пулăшакан ĕç вырăнĕ тупма йывăр. Вăйлă аталаннă хуçалăхсем çук. Çакна кура ял тăрăхĕн бюджечĕ чухăн", – туххăмрах хуравлĕччĕ лару-тăрăва ăнланакан çын.**

### Тăван тăвана пулăшнинче мĕн япăххи?

Тăван тăвана пулăшни япăх-им тата?! Владимир Германович Николаева уйрăмах кĕçĕн шăллĕ Николай, предприниматель пулнă май пулăшать. Вăл хăй çуралса ӳснĕ тăрăха илем кĕртме нумай тăрăшать. "Сирĕн вырăнта урăх çын ларнă пулсан çапла тăвĕччĕ-и?" – ыйтатăп вырăнти пуçлăхран. "Ман шухăшпа çакă уншăн пĕлтерĕшлĕ мар. Кирек кам пулсан та тăван ялне пурпĕрех пулăшăччĕ", – терĕ вăл.

Шел те, унашкалллисем паян сайра, шутлă. Нумаях пулмасть шкул пулăшу ыйтнăран Николай Германович хутса ăшăтмалли тытăма, мĕнпур чӳречене пластиклипе улăштарма пулăшнă. Ялти ватăсене те манмасть, хальччен вĕсене хăй шучĕпе хумпа ăшăтакан кăмакасем те, чаплă çурăм ăшшисем те парнеленĕ. Ял администрацийĕн çуртне кĕнĕ çĕрте видеокамера вырнаçтарнă. Çакă та унăн парни. Владимир Германовичпа ял пурнăçне тишкернĕ хушăра унăн ячĕ тата темиçе хут янăрарĕ. Татăлмарĕ тесен тĕрĕсрех те. Ял тăрăх администрацийĕн çурчĕ хысĕнчи вырăна типтерлетчĕç. Машинăпа çĕр турттараççĕ, ĕçченсем ăна сапаласа якатаççĕ. Кунта Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче пуç хунисене асăнса çĕнĕ палăк лартасшăн. Унта кашнин ятне çырса хурасшăн, сăнĕсене пысăклатса вырнаçтарасшăн. Парк йĕркелесшĕн. Кăвак чăрăшсем ӳстересшĕн тата ытти те.

Ĕç мăй таран. Акă пуçлăхăн пӳлĕмне çамрăк арçын кĕрсе тăчĕ. Çĕр тиекен экскаваторăн урапи шăтнă-мĕн. Сапламалли материал туянмалла. Владимир Германович темиçе çын патне шăнкăравласа çула тухма транспорт тупса пачĕ. Тем вăхăтран пӳлĕмре каллех çын курăнса кайрĕ. Пуçлăх вăл мĕн сăлтавпа килнине тӳрех ăнланчĕ. Палăк таврашĕнчи парк чиккийĕ унăн пахчи хысĕпе иртет. Ватă арçынна картана çĕнĕрен тытасси канăçсăрлантарать. Пăшăрханас çук, ăна ял администрацийĕ хăех тытса парать, унччен маларах чикке тĕрĕс палăртма лаптăка çĕр кĕнекипе усă курса пахча хуçисен умĕнчех висĕ. Парк тăршшĕ пĕтĕмпе 180 метр пулмалла.

Тавралăх кам пулăшнипе илемленет тетĕр-и? Чухлама кăткăс мар – Николай Германович ялшăн каллех ырă ĕç тăвать.

2-мĕш стр. ➔

ВĂЙ ПАТĂР!

# Çукран пур тусан



Алексей ИЛЬИН сăнӳкерчĕкĕ

**Çутă та пысăк цехра машинăсем пĕр евĕр кĕрлеççĕ. Çĕвĕçсен аллисем хăвăрт выляннаççĕ: пĕри тумтир çаннине çĕлет, тепри – çухавине... Куç умĕнчех татăк-кĕсĕкрен илемлĕ куртка пулса тăчĕ. Тавар купи ӳссех пырать. Кĕçех ăна чĕркемлесе вырăнти предприятисене, Мускава ăсатĕç.**

**Темиçе çул каялла кăна-ха Светлана Белоусова пайтаçа тухасса шухăшлама та пултарайман. Хусанти училищĕрен вĕренсе тухнă çамрăк хĕр тăван Вăрмар районне таврăнса вырăнти çĕвĕ фабрикине вырнаçнă, ăсталăха туптанă.**

2-мĕш стр. ➔

КУН ЙĔРКИНЧЕ

# Пĕрле-и е уйрăм-и?

## Чăваш чĕлхин орфографи йытăвĕсене татса пама тахçанах вăхăт çитнĕ

**Вăл е ку сăмаха епле çырасси паян тапраннă сăмах мар. Чылайăшне (чĕлхеçĕсене, çыравçăсене, хаçат е кĕнеке вулакансене...) тахçанах калаçтарать вăл.**

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Социаллă политика тата наци ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комитечĕн председателĕ Петр Краснов ертсе пынă "çавра сĕтел" ларăвĕнче чăваш чĕлхин орфографи тата пунктуаци правилисене улшăнусем кĕртессине пăхса тухрĕç. Унта депутатсем, министрсем, ăслăлăх çыннисем, чĕлхеçĕсем, çыравçăсем, вĕрентекенсем, общество ĕçĕн хастарĕсем тата ыттисем хутшăнчĕç. Сăмахсене тĕрĕс çырас енĕпе "революци тумасăр, пĕр-пĕрин пĕлĕвне шута илсе пĕр шухăшлăх патне çитме" палăртрĕç вĕсем.

Правилăсене улшăнусем кĕртес ыйтăва ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ Юрий Попов февраль уйăхĕнче ирттернĕ брифингра та çĕкленĕччĕ. Ун чухне парламент спикерĕ орфографи правилисене чи малтан экспертсен хак памаллине, унтан тин Патшалăх Канашĕн е ĕç тăвакан влаçăн вăл е ку йышăнăва çирĕплетмеллине палăртнăччĕ. Профильлĕ Комитет ертӳçин Петр Красновăн шухăшĕ урăхларахчĕ. Вăл "улшăнусем кĕртме хистекен самантсем пуррине" пĕлтернĕччĕ. Халĕ йĕркеленĕ "çавра сĕтелте" те çак шухăш ытларах палăрчĕ. Чылайăшĕ иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенчи реформа (унпа килĕшӳллĕн хутлă сăмахсене уйрăм çырма пуçлани) васкаварлă тата вăхăтсăр пулнине палăртать.

Çак йышăнăва тĕплĕ шухăшламасăр çирĕплетни "Чăваш Республикин чĕлхе çинчен" саккунне пурнăçлама та чылай чăрмантарнине пĕлтерчĕ культура министрĕ Вадим Ефимов. "Республикăри пичет тата электрон информаци хатĕрĕсенче архаизмсемпе анлă усă кураççĕ. Çавна май çыру чĕлхи калаçу чĕлхинчен уйрăм аталанса пыни сисĕнет. Çынсене, уйрăмах хулара ӳссе çитĕннисене, чăвашла çырнине ăнланма питĕ йывăр. Çавна май тата чăваш чĕлхипе кулленхи пурнăçра усă курасси чакса пырать", – терĕ министр. "Шкулта кивĕ правилăсемпе вĕреннĕ. Университетра – çĕннипе. Апла пулин те манăн кивĕллех çырас килет", – хушса хучĕ вăл юлашкинчен.

3-мĕш стр. ➔

### ЧР Пуçлăхĕн Çырăвне хатĕрлеме пуçланă

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев республикăн Патшалăх Канашне яракан Çырăва хатĕрлес енĕпе ĕçлеме пуçланă. Çав документра Правительство, Патшалăх Канашĕ, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем, предприятисемпе организацисем малашлăхра мĕнле ĕçлессине палăртĕç.

Çырăва хатĕрленĕ май республикăра пурăнакансен, общество организацийĕсен, граждан обществин ытти институчĕн шухăшне шута илеççĕ. Халăхăн пурнăç пахалăхне ӳстерме чи малтанах мĕн тумалла? Чăваш Ен Пуçлăхĕн мĕнле темăсене ытларах витĕмлемелле?

Сĕнӳсене çак адреспа йышăнаççĕ: Чăваш Республики, Шупашкар хули, Президент бульварĕ, 10-мĕш çурт; e-mail: pres0@cap.ru – "Çырăва хатĕрлеме".

### Йĕркеллĕ упрасси çăкăр ыйтмасть

Патшалăх техника сăнав ĕçченĕсем районсенче ял хуçалăх техникине хĕллене мĕнле упрама лартнине тĕрĕсленĕ, тивĕçлĕ хак панă. Чи лайăх пĕрлешӳсене республика шайĕнчи конкурса тăратнă. Пĕтĕмпе кăçал 17 хуçалăх тупăшнă. Пĕрремĕш вырăна Патăрьел районĕнчи "Труд" ЯХПК çĕнсе илнĕ. Иккĕмĕш вырăна Канаш районĕнчи Киров ячĕллĕ хуçалăхпа Муркаш районĕнчи "Путь Ильича" пĕрлешӳ пайланă. Виççĕмĕш вырăна икĕ хуçалăх тивĕçнĕ: Тăвай районĕнчи "Акконд-агро" фирма тата Çĕрпӳ районĕнчи "Авангард" "Цивильский бекон" пĕрлешĕвĕн филиалĕ.

### Ӳсĕм пур

Чăвашстат пĕлтернĕ тăрăх – кăçалхи январь-сентябрь уйăхĕсенче ял хуçалăхĕнче, сунар ĕçĕнче тата вăрман хуçалăхĕнче ĕçлекенсен уйăхри вăтам ĕç укçи 12546,5 тенкĕпе танлашнă (пĕлтĕрхи çак тапхăрăн 115,8 проценчĕ). Республикăри экономика тытăмĕнчи вăтам ĕç укçи шайĕпе танлаштарсан 61,8 процент пулать. Республикипе илсен асăннă тапхăрта ӳсĕм 108,4 процентпа танлашнă.

Апат-çимĕç (ку шута тĕрлĕ напиток кăларакансем те кĕреççĕ) хатĕрлекен производствăра тăрăшакансен уйăхри вăтам ĕç укçи 18678,8 тенкĕ пулнă (пĕлтĕрхи тапхăрăн 107,8 проценчĕ).

### ÇАНТАЛĂК

| Шупашкарта | Вăхăт | 12.11 | 13.11 |
|---|---|---|---|
| Температура, °C | 2–4 сехетре | +2 | +2 |
| | 14–16 сехетре | +4 | +3 |
| Çумăр çăвать | | ☔ | ☔ |
| Атмосфера пусăмĕ, мм | | 757 | 756 |

# Çукран пур тусан

1-мĕш стр.

Машина умĕнче пуçа çĕклемесĕр тенĕн çĕлесе ларма тивни тивĕçтермен ăна. Пурнăçне, умри çулне улăштарас тĕллевпе çемье, ача-пăча пуррине пăхмасăрах Хусанти технологи институтĕнчен вĕренсе тухнă. Маттур хĕрарăм служба картлашкипе хăпарса пынă: çĕвĕç, контролер, технолог... генеральнăй директор. Туслă та çирĕп коллективра ĕç кал-кал шунă, тавар тусанланса выртман.

Лару-тăру улшăнман пулсан паянхи кун та пуçлăхăн çемçе пуканĕ çинчех ларнă пулĕччĕ-ши Белоусова? Предприяти хулăн кĕсьеллисен аллине куçсан хăнăхнă пурнăç чăл-пар арканнă. Ирĕксĕрех тепĕр ĕç вырăнĕ шырама тивнĕ. Чăн та, çĕнĕ хуçасем Светлана Белоусовăна директортах юлма сĕннĕ, анчах такамшăн тар тăкма килĕшмен вăл.

– Фабрикăна сутлăха тăратсан ăна тунас шухăш та пурччĕ. Шел, укçа-тенкĕ çителĕксĕррипе илеймерĕмĕр, – терĕ Светлана Николаевна.

Çапах алăри пилĕк пÿрне пек пĕлсе çитнĕ ĕçрен те уйăрăлас килмен унăн. Мăшăрне, Вениамин Леонидовича, уйрăм предприяти уçассине пĕлтерсен лешĕ хирĕçлемен. Йывăр тапхăрта çывăх çынни алă тăсса пани хĕрарăма малалла хăюллăн утма çунат хушнă тейĕн. Ĕçчен çын çукран та пур тăвать тенĕ. Белоусовсем пÿлĕм тара илсе оборудовани, пусма-тавар туяннă. Район администрацийĕ бизнес йĕркелеме 250 пин тенкĕ грант уйăрни, Раççей ял хуçалăх банкĕн Вăрмарти хушма офисĕ кредитпа пулăшни çемьен ĕмĕтне çывхартма пулăшнă.

Ĕмĕт пурнăçа кĕрсе пыни, юратнă ĕç Светлана Николаевнăна йывăрлăха пăхмасăр малалла талпăнма хавхалантарнă. Унăн пуçарăвне фабрикăра пĕрле вăй хунисем ырласа йышăннă, çĕнĕ фирмăна хаваспах куçма килĕшнĕ.

Вăрмарти «Светлана» пĕрлешÿ хăй çулĕпе утма тытăннăранпа тăватă çул иртнĕ. Предприяти çак тапхăрта палăрмаллах вăй илсе çĕкленнĕ. Кĕске хушăра сарăлса ура çине çирĕп тăма пултарнă вăл. Унччен пек тăвăр пÿлĕмсенче те хĕсĕнсе лармаççĕ çĕвĕçсем. 2011 çулта Вăрмар мунчи пулнă çурта туянса тĕпрен юсаса çĕнетнĕ, хушма çурт çĕкленĕ. Халĕ икĕ хутлă капмар çуртра ирĕклĕ, çутă, таса, ăшă. Паллах, ăна туянса йĕркене кĕртнĕ май каллех банка кивçене кĕнĕ.

Коллектив пысăкланнă. Унччен, пĕрлешĕве уçнă тапхăрта, 40 çын вăй хунă, халĕ – 70. Çывăх вăхăтра йыш тата хушăнмалла: тумтир пайĕсене касакан тепĕр цех хута каймалла. Малашне уйăхне 12 пин япала çĕлеме пуçламалла (халĕ – 10 пин). Фирма районти мĕнпур предприятие ĕç тумĕпе тивĕçтерсе тăрать. Шупашкартан та килеççĕ туянма. Мускавпа, Хусанпа ĕçлĕ çыхăнусем çирĕпленсех пыраççĕ. Светлана Николаевна каланă тăрăх – Мускавсемпе фабрикăра ĕçленĕ чухнех çыхăну çирĕпленнĕ. Мускаври «Восток-Сервис» компани хăйĕн фабрикисене хупсан та Вăрмарсемпе çыхăнăва татман. Вĕсен таварне паян та хапăлласах йышăнаççĕ, заказсем параççĕ.

Пĕрлешĕвĕн республикăра филиалсем пур: Вăрмар, Сĕнтĕрвăрри, Елчĕк, Элĕк, Красноармейски районĕсенче. Хăшне-пĕрне Белоусовсем уçнă, теприсем пулăшу ыйтса килнĕ. Унччен тĕллĕн ĕçленĕскерсем заказсăр юлсан хупăнас патнех çитнĕ.

– Çурт-йĕр, опытлă çĕвĕçсем, оборудовани пур, анчах заказ çук. Эпир каснă хатĕрсемпе тивĕçтеретпĕр, вĕсем – таварпа. Нумаях пулмасть Патăрьел, Тăвай районĕсенчен те çитрĕç – пирĕнпе çыхăнса ĕçлесшĕн. Предприяти сарăлнă май вĕсем валли те ĕç тупăнĕ, – палăртрĕ Светлана Николаевна. – Пĕчĕк цехсенче йыш пысăк мар, вуншар çын кăна. Кун пек филиалсем ял хĕрарăмĕсемшĕн уйрăмах аван – вĕсене ĕç тупса вырнаçма çăмăл мар, арçынсем пек кил пăрахса аякка тухса каяймаççĕ. Çĕвĕçсене ялсенчен Вăрмара кашни кун турттарма тăкаклă. Машина эрнере пĕр хут филиалсене касса хатĕрленĕ пусмасем çитерсе парать, сутлăх тавара илсе тухать. Капла пирĕншĕн те меллĕ. Шалу ĕçленĕ тăрăх тÿлетпĕр, кÿренмелле мар.

Çамрăксене ĕçе хаваспах йышăнаççĕ, опыт çук тесе тиркешсе тăмаççĕ, вырăнтах вĕрентсе хатĕрлеççĕ.

Предприятие курса çÿренĕ май илемлĕ чĕркемсем асăрхарăмăр. Нумаях пулмасть кунта вырăн тавраšĕ çĕлеме пуçланă иккен. Хатĕр тавар Хусана каять, пусмине те унтанах кÿрсе килеççĕ, заказсем йышăнаççĕ. Вырăн тавраšне Вăрмарсем те хапăлласа туянаççĕ. Хакĕ, пахалăхĕ тивĕçтерет вĕсене. Çавна май Белоусовсем çывăх вăхăтра предприятипе юнашарах лавкка уçасшăн.

– Мĕнлерех вăл, бизнеса уçса тытса пырасси? – ыйтатăп Светлана Николаевнăран.

– Çăмăл мар. Эпир совет тапхăрĕнче çитĕннĕ çынсем яланах саккуна пăхăнса ĕçлеме хăнăхнă. Пирĕн ĕç-хĕл йăлтах уçăмлă, курăмлă, – хураварĕ вăл.

Шалăва вăхăтра пани, тÿлевсемпе çийĕнчех татăлса пыни, – пĕр сăмахпа каласан, алă тупанĕ çинчи пек пулни ура та хуратьмĕн пурнăçра: тĕрĕслевçĕсем час-часах çаврăнса çитеççĕ фабрикăна. Çав хушăрах Вăрмар тăрăхĕнче вăртăн çĕвĕ цехĕсене аса илекен те çук. Пайтаçăсем ялсенче пушă ларакан пурăнмалли çуртсенче çĕвĕ цехĕсем уçни никамшăн та вăрттăнлăх мар. Документсенче кăтартман пирки вĕсене тĕрĕслекен çук, налук та тÿлемеççĕ. Хăйсем тĕллĕн ĕçлекенскерсем пысăк предприятисемпе тупăшăва кĕреймеççĕ-ха, анчах ирĕклĕн сывлама та кансĕрлеççĕ. Вĕсен те тавара вырнаçтармалла-çке.

– Мăшăрăм йывăр вăхăтра пулăшса пынипе çеç бизнеса йĕркелесе пыма пултартăм. Паян та пĕрлех вăй хуратпăр. Унăн хăйĕн бизнесĕ, предприяти-организацие, çынсене транспорт çăмăллăхĕ парать. Фабрикăна та вăлах транспортпа тивĕçтерет: пусма таврашĕ илсе килет, хатĕр таварсем турттарать, – терĕ Светлана Белоусова. – Вениамин Леонидовичпа 30 çул пĕрле утатпăр. Хĕрпе ывăл çитĕнсе тухса кайнă хыççăн вăхăта виççĕмĕш ачапа – фабрикăпа – иртгеретпĕр. Вăй-хал, укçа-тенкĕ ăна ура çине çирĕп тăратмах тухса каять.

**Лариса НИКИТИНА.**

# Мал шухăш малах турттăр

1-мĕш стр.

### Хура кĕркунне тĕттĕм мар

**– Владимир Германович, тумалли ĕçсен ытларах пайне эсир кăçалах пурнăçласшăн. Çитес çултах майăн 9-мĕшĕччен ĕçлеме вăхăт сахал юлать. Тĕрĕсех шухăшлатăп-и?**

– Палăкне кăçалах вырнаçтарасшăн. Темле ĕлкĕрĕпĕр ĕнтĕ. Малтан палăртнă эскиза кăшт улăштарма тиврĕ. Палăка паха материалтан тутаратпăр. Ытти ĕçе те лайăх тăвасшăн.

**– Ун çинчен ĕçе вĕçлесен калаçăпăрха. Халĕ кулленхи пурнăçа таврăнар. Ял çыннине мĕн çитмест? Акă урамра – хура кĕркунне. Каççерен тĕттĕм. Сирĕн ял урамĕсенче те çапла-и?**

– Виçĕ ялта (Çĕнĕ тата Кивĕ Шелттемсенче, Маякра) çутă çутассине автоматика мелĕпе йĕркеленĕ. Светодиод лампочкисем çакнă. Хаклă, паллах, анчах капла туни тăкака саплаштарать. Малтанхи лампочкăсене каçхине çутсан ирхине кăна сÿнтерме май пулнă. Халĕ халăх сĕт пама тухнă вăхăтра 1-1,5 сехетлĕхе çутса илетпĕр. Унтан тĕттĕмленсен çутатпăр та çурçĕр иртсен сÿнтеретпĕр. 20 ватлă лампочкăсем çав тери çутă мар, анчах каçхине такăнса ÿкместĕн. Çутăна перекетлесе эпир лампочкăсен шутне ÿстересшĕн.

**– Такăнса ÿкместĕн терĕр, мĕн, ял хушшинчи çулсем çаплипех япăх-им?**

– Аплах мар. Урамсене кашни çул пĕчĕккĕн çĕнетме тăрăшатпăр. Патшалăх программи шучĕпе те, вырăнти бюджет укçи-тенкипе те. Кивĕ Шелттемре акă пĕр урам тăршшĕ 1,5 çухрăм. Ирĕксĕрех ăна пайăн-пайăн çĕнетме тивет. Ял çыннисем хăйсем те укçа хушса çула хăвăртрах туса пĕтерме пулăшаççĕ. Ара, ирпе сĕт пама тухаканăн урамăн пĕр вĕçĕнчен теприне утса çитмелле вĕт. Çул хăйсенех кирлине ăнланни савăнтарать.



**– Каçарăр сăмахăра пÿлнĕшĕн. Урамра е ялта пуçарулла çын тупăнмасан ытларах чухне халăх пурпĕр хăнк та тумасть.**

– Тĕрĕсех. Кивĕ Шелттемре чи малтанах Владимир Иванова тав тумалла. Пуçаруллисем, ялти хăтлăхшăн чунпа çунакансем таврара пур. Тĕслĕхрен, ФСБ тытăмĕнче ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнă Василий Кошкин пĕлтĕр Маякра часавай тума тытăнчĕ. Çĕнĕ Шелттемре Вячеслав Иванов пенсионер шыв пăрахĕсен юсавлăхне лайăх сăнаса тăрать.

**– Ял халăхĕ хулари пекех лайăххине хăвăрт хăнăхса çитрĕ. Кил-çуртра шыв пулмасан "кăравул" та кăшкăрать мар-и?**

– Икĕ ялта шыв пăрахĕсене эпир 2006 çултах тĕпрен улăштарнă. Патшалăх программине лекни пулăшнă. Паянхи куна ку тытăмра та пирĕн автоматика линийĕ ĕçлет. Шыв насусне перекетлĕ ĕçлеттерекен станцие туянма укçа-тенкĕпе каллех Николай Германович пулăшрĕ. Унччен хи шыв башнисем пирĕн тăрăхра усă курма юрăхсăртараххине ăнланса илчĕç. Шартлама сивĕсемсĕр регионсенче кăна вĕсене ĕçлеттерме аван. Çĕнĕ станципе пăрахсем шăнас хăрушлăх çук. Кам та пулин шыв ăсма пырсан кăна насус ĕçлесе каять. Кивĕ, мăн башньăра çулла çапах та шыв тытатпăр. Вут-çулăм, пушар тухасран сыхланатпăр.

**– Çакă та ял çыннишĕн пĕлтерĕшлĕ.**

– Пĕлтерĕшлине тĕпе хурса пушар сÿнтерекен машинăна 2004 çултанпа тытатпăр. Депора хĕлле – 2 (ку вăхăтра ăна хутса ăшăтмалла), çулла 1 çын ĕçлет. Çавăн пекех пирĕн 800 литр шыв кĕрекен ятарлă помпа пур. Вут-çулăм тухсан хамăр вăйпа ăна çийĕнчех сÿнтернĕ.

**– Владимир Германович, ахăртнех, сирĕн тăрăхри ялсем те йышсăрланаççĕ е ватăлса пыраççĕ.**

– 5 ялта 1264 çын пурăнать. Йыш çав тери чакнă тесе калаймастăп. Хам ĕçлеме пуçланă 2004 çулта та вăл 1300-е яхăнччĕ. Калăпăр, пĕлтĕр 10 ача çуралнă, çавăн чухлех çын çĕре кĕнĕ.

**– Сирĕн тăрăхра вăйлă аталаннă ял хуçалăх пĕрлешĕвĕсем çук. Апла ял çыннисем ялта мар, е Канаш хулине, е инçете çÿресе пурнăç тытса пыраççĕ.**

– Халĕ ял хуçалăхĕнче те ĕç майĕ улшăнать, аталаннă техника нумай çынна ĕçлеттермест. Паллах, ялта пĕр-пĕр предприяти пулсан вырăнти пурнăç тĕпрен улшăнĕ. Ачасем те çуралĕç, ялăн малашлăхĕ те пулĕ. Çемьере ача нумай пулни ял тăрăхне шиклентермест. Çуратчăр кăна, çурт лартма вырăн тупса паратпăр.

Ялта производство йĕркелеме хăй вăхăтĕнче Мускаври инвесторсемпе те калаçнăччĕ. Килсе пăхрĕç, анчах килĕшмерĕç. Предприятие хута ярсан специалистсене ăçта тупмалла терĕç. Инçетрен турттарма тăкаклă. Ял тăрăхĕ хула çывăхĕнче мар.

**– Тен, ĕç вырăнĕ йĕркелессипе те Николай Германович пулăшма пултарĕ?**

– Шухăшласа пăхăпăр.

**– Владимир Германович, ял тăрăхĕн пуçлăхĕ чи малтанах кам вăл?**

– Мал шухăшлă çын, урăхла каласан – оптимист. Эпир – ял пурнăçне йĕркелесе пыракансем. Ял çынни пурнăçа килĕнче тăватă кĕтесре те иртгерме пултарать. Килтен – ĕçе, ĕçрен киле çÿресех. Ĕмĕр вара иртет. Аса илмелли пулĕ-и? Аса илмелли пултăр тесех çынсене общество пурнăçне явăçтарма тăрăшатпăр. Эпир те тумасан кам пурнăçлĕ çак ĕçе?..

**Ирина НИКИТИНА.**

# Пĕрле-и е уйрăм-и?

← 1-мĕш стр.




Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн директорĕн Юрий Исаевăн шухăшĕпе – "сăмахсене пĕрле, уйрăм е дефиспа çырасси хальхи вăхăтра чĕлхе пĕлĕвĕн аннинче вăй хураканçемшĕн, чăваш чĕлхине аслă тата вăтам шкулта вĕрентекенсемшĕн нимĕнле йывăрлăх та кăларса тăратмасть. Çĕнĕ правилăсене йышăнманнисем – пурте тенĕ пекех аслă ăру çыннисем". "Чĕлхеçĕсене "чăваш чĕлхине вырăслататăр" тесе айăплакансенчен ытларахăшĕ хăйсем вырăсланни курăнать. Нумай çын вырăсла шухăшлава куçать те чăваш чĕлхин вырăс чĕлхинче çук уйрăмлăхĕсене тăван чĕлхемĕрĕн çитменлĕхĕ тесе хаклама, кулăшла контекстсем ăсталама, вырăс чĕлхи шайне çитермелли саплаштарусем шырама пуçлать. Хальхи орфографи правилисене, тĕпрен илсен, И.А.Андреев профессорăн теорийĕ çине таянса хатĕрленĕ, пулас ăрусене вĕренме çăмăлтарах пултăр тесе тунă. Унччен пĕрле çырнă сăмах майлашăвĕсене кивĕллех çырма ирĕк парса пĕрле çырас текенсен интересĕсене те шута илнĕ. Ятарлă асăрхаттарура каланă тăрăх – пĕрле е уйрăм çырассине текста тĕрĕс те уçăмлă ăнланассипе çыхăнтармалла", – терĕ Юрий Николаевич.

ЧНК президенчĕ Николай Угаслов "чĕлхе ыйтăвне халăхпа канашласа, çав вăхăтрах ăсчахсен сăмахне итлесе татса пама" сĕнет. "Мĕн пур япалана наука вĕрентнĕ пек тумалла. Вара тин ăнăçу пулать. Чăваш чĕлхине шкулта вĕрентни кăна çителĕксĕр. Ача садĕнче пуçламалла çак ĕçе", – терĕ вăл. Анчах... Республикăри хăш-пĕр шкулта 5-11 класенче чăваш чĕлхипе литературин сехечĕсем чакрĕç. Çапла тума РФ Вĕрентӳ министерствин хушăвĕ хистет. Документпа килĕшӳллĕн тăван (вырăс мар) чĕлхе регион компоненчĕ шутланать, вĕрентĕвĕн федераци компоненне кĕмест. Çавна май пилĕк кунлă вĕренӳ эрни çине куçнă май сехетсене ирĕксĕрех чакарма тивет. Çĕнĕлĕх тăван чĕлхене вĕрентессине сиенлеме пултарассине палăртрĕ вĕренӳ министрĕ Владимир Иванов.

Элĕк вăтам шкулĕ республикăра чи малтан çĕнĕ йĕркепе ĕçлеме пуçланă. Шкул директорĕ Владислав Волков чăваш чĕлхине дистанци мелĕпе вĕрентме шухăшланине палăртрĕ. "Урăх çĕршывсенче пурăнакансем те халĕ пирĕн шкул сайтне кĕрсе чăвашла вĕренме пултараççĕ", – терĕ вăл. ЧР Вĕрентӳ институчĕн кафедра пуçлăхĕн Анна Егорован шухăшĕпе – пĕр-пĕринпе хутшăнмасăр чĕлхене вĕренме, аталантарма çук. "Орфографи çинчен калаçмасăрах чуна ыраттаракан ыйту чылай пирĕн. Тавлаштараканни, ахăртнех, пĕтĕмпе те 50 сăмах çеç", – терĕ А.Егорова.

Виталий Станьял ăсчах та орфографи пирки калаçма пăрахмаллине пусарсах каларĕ. "Чĕлхе ыйтăвне пĕлекен çынсен сӳтсе явмалла", – терĕ вăл. Çак шухăша Петр Яковлев поэт та палăртрĕ. "Чунпа поэт эпĕ, специальноçпа – лингвист. Çыравçă пулни сăмахсене пĕрлештерме хистет, чĕлхеçĕ пулни – уйăрма. Халĕ манăн мĕнле çырмалла-ши? Нумай тĕрлĕ шухăш каларĕç "çавра сĕтелте". Анчах вĕсем пурте тăван халăх пуласлăхĕшĕн пăшăрханса каланă сăмахсем. Хулара чăвашла вĕрентме пуçлассишĕн еплерех "çапăçрĕç". Тӳрех чăвашла калаçса каяссине кĕтме çук. Уйрăм е пĕрле çырассине чĕлхеçĕсен татса памалла. Юрий Исаев каланине шута илмелле".

Чĕлхе пуласлăхĕшĕн "çапăçнине" "Хыпар" хаçатăн тĕп редакторĕ Валери Туркай та аса илчĕ. "Иртнĕ ĕмĕрĕн 80-90-мĕш çулĕсенче тăван чĕлхе пуласлăхĕшĕн хĕрӳ кĕрешӳ пычĕ. Выçă та лартăмăр. Икĕ чĕлхе пĕр танлăхне туса хутăмăр. 1994 çулта çĕнĕ правилăсене çирĕплетрĕç. Юлашки сăмаха специалистсен каламалла тесе шухăшларăмăр. Анчах вĕсен сăмахĕ мĕн пуррине аркатса тăкасси пирки пулчĕ. Чи малтан "Хыпар" никампа канашламасăр çĕнĕ правилăсем çине куçрĕ. Çав правилăсене эпĕ нихăçан та йышăнман, йышăнмастăп та. Çĕмĕрмесĕр, аркатмасăр орфографин йĕркеллĕ правилисем патне куçатпăр", – терĕ Валерий Владимирович.

В.Туркай палăртнă "йĕркеллĕ орфографи правили" е ЧР Патшалăх Комитечĕн председателĕ Петр Краснов калашле "пирĕн тĕп документ" е 20 çул каялла йышăннă "çĕнĕ правилăсем" вăл – Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ тата Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ йышăннă "Чăваш орфографийĕпе пунктуацийĕ. Тĕрĕс çырмалли правилăсем". Ăна И.Андреев профессор редакциленĕ. Авторсен йышĕнче – И.Андреев, Ю.Виноградов, И.Павлов. Правилăсене ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ В.Шурчанов 1994 çулхи ноябрь уйăхĕн 13-мĕшĕнче алă пусса çирĕплетнĕ. 1995 çулхи февралĕн 1-мĕшĕнче "Хыпар" хаçатра пичетлесе кăларнă.

"Правилăсен" 75-мĕш параграфĕнче çапла çырнă: "Текста тĕрĕс ăнланма чăрмантарман чухне сăмах майлашăвĕсене уйрăм çырмалла. Çапах та çынсен ăс-тăнĕнче чылай сăмах ушкăнне вĕсен пĕлтерĕшĕпе формине кура пĕр сăмаха пĕрлештерес туртăм пур. Çак туртăмпа килĕшӳллĕн ку тăранччен пĕрле çырма хăнăхнă сăмахсене малашне те çаплах çырма юрать: *авăнçи, айсарăм, акапуç, акатуй, акаçи, ăлăсталăх, алăстаçă, алăсти, алĕç, алпалли, алçемми, алçыру, алылмаш, арçын, арçури, амаçури, атпăри, ăçтиçук, ĕçкунĕ, кĕлту, кĕраки, мăнакка, мĕнпур, пурпĕр, пуçхĕрлĕ, сакай, сăнӳкерчĕк, сăхсăх, сухапуç, çăлкуç, çăматă, çĕршыв, çулпуç, çураки, çутĕç, улатакка, хĕрача, хытхура, чĕрçитти, чупту, шурăмпуç, шурут; тунтикун... вырсарникун; вунпĕр... вунтăххăр, сакăрвуннă, тăхăрвуннă, икçĕр... тăхăрçĕр; икчĕлхелĕх, пĕрпеклен, çулçӳрев, тавракурăм, тĕлпулу* т.ыт.те.

Пĕрле е уйрăм çырассине текста тĕрĕс те уçăмлă ăнланассипе çыхăнтармалла: *пĕр кун* (шутри кун) – *пĕркун* (хальтерех), *пĕр май* (пĕр мел) – *пĕрмай* (ялан), *çур утрав* (утрав çурри) – *çурутрав* (материк пайĕ), *çур çĕр* (талăк саманчĕ) – *çурçĕр* (тавралăх енĕ), *арçын ача* (ар çын ача çырни ăнланма йывăрлатнă пулĕччĕ)".

Документ пур, правилăсем пур... Унта хăш сăмахсене пĕрле çырмаллине уçăмлă кăтартнă. Ыйту сиксе тухать, хăш вăхăтра тата кам хистенипе вĕсене уйрăм çырма пуçланă-ха. Чăваш орфографийĕпе пунктуацийĕн правилисем кирек камшăн та саккун пулмалла пек туйăнать. Пурин те (вĕренекен-и е вĕрентекен-и, ăсчах-и е ахаль вулакан-и...) ăна пăхăнмалла. Манăн капла çырас килет те, маншăн çапла илемлĕрех е килĕшӳллĕрех тени мĕн патне илсе çитерет-ха. Йывăрлăхсем кăна кăларса тăратать. Тата тавлашу çуратать.

..."Çавра сĕтел" ларăвĕнче хĕрӳ калаçакан çын чылай пулчĕ. Юлашкинчен çапларах сĕнӳсем пайăрланса çирĕпленчĕç. ЧР Министрсен Кабинетне чăваш чĕлхин орфографипе пунктуаци правилисен çитменлĕхĕсене тупса палăртас тĕллевпе ăна халăх хушшинче сӳтсе явассине йĕркелеме; патшалăх чĕлхи пек усă курнă чухне хальхи чăваш литератури чĕлхин нормисене çирĕплетмелли йĕркене палăртма; Раççей Федерацийĕн, Чăваш Республикин саккунĕсемпе килĕшӳллĕн географи объекчĕсен, çул тата ытти кăтартмăшсен ячĕсене тĕрĕс çырассине (кунта хулари чарăну вырăнĕсен чăвашла ячĕсем çухални пирки сăмах пырать) тивĕçтерме сĕнсе хăварчĕç. Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ кăсăкланакан мĕн пур çынна явăçтарса чăваш чĕлхин орфографипе пунктуацин çивĕч ыйтăвĕсемпе ăслăлăх-практика конференцийĕ ирттерĕ.

**Валентина БАГАДЕРОВА.**
(«Хыпар», 2014, ноябрь, 6)

## Икĕ ĕçре юрать-ши?

**?** **Эпĕ – виççĕмĕш ушкăнри инвалид. 1987 çултанпа пĕччен пурăнатăп, час-часах чирлетĕп. Çавна май районти халăха социаллă хӳтлĕхпе тивĕçтерекен пай урлă мана пăхса тăма социаллă ĕçчен пачĕç. Вăл хамăр ял çынниех. Хăйĕн ĕçне тивĕçлипе пурнăçламарĕ. Юлашкинчен мана пăхма пăрахрĕ. Малашне мĕнле пурăнмалла-ши? Социаллă ĕçчен саккун тăрăх – пĕр вăхăтрах темиçе ĕçре вăй хума пултарать-ши?**

**Анатолий ТОЛСТОВ.**
**Етĕрне районĕ, Пушнар ялĕ.**

Ыйтăва уçăмлатма районти халăха социаллă хӳтлĕхпе тивĕçтерекен пай пуçлăхĕпе Андрей Софроновпа телефонпа çыхăнтăмăр. Социаллă ĕçчен темиçе ĕçре вăй хума пултарассине палăртрĕ вăл. Сăмахран, сире пăхнă вăхăтрах почтальонра та ĕçлеме пултарать. Мĕншĕн тесен пулăшу ĕçĕсене пурнăçланă май кунĕ-кунĕпе сирĕнпе юнашар пулмасть-çке вăл.

Ку тĕлĕшпе сире пăхнă Надежда Облиновăпа та, ял тăрăхĕн ĕçченĕсемпе те çыхăнтăмăр. Надежда Викторовна сирĕнпе пĕр чĕлхе тупайманнине каларĕ. Çавна май хăйĕн тивĕçĕсене пурнăçлама пăрахнă вăл. Ял тăрăхĕн ĕçченĕсем Надежда Викторовна пирки ыррине çеç пĕлтерчĕç.

Малашне сирĕн çума тепĕр ĕçчен çирĕплетессе шанас килет. Ватлăх, паллах, никама та савăнтармасть. Çын куçĕнчен пăхнă чухне пушшех те. Çавăнпа та пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăннинчен ырри çук.

## Сăра-эрехе хирĕç

**?** **Хăй вăхăтĕнче Хусанта Урă пурнăç обществине йĕркеленине илтме тӳр килчĕ. Вăл хăш çулсенче ĕçленĕ? Çĕршыв историйĕнче мĕнле йĕр хăварнă?**

**Зоя СЕМЕНОВА. Тăвай районĕ.**

Урă пурнăç обществи 1892 çулта Хусанта йĕркеленнĕ. 1917 çулччен ĕçленĕ.

Ку вăхăтра асăннă хулара эрех сутасси сарăлнă. Сăмахран, 1894 çулта Хусанта пурĕ те 140 пин çын çеç пурăннă. Эрех кĕрсе ĕçмешкĕн 300 ытла çурт уçнă.

Общество уставĕнче çапла палăртнă: «Халăх эрех таврашĕ ĕçнине хирĕç кĕрешĕве вăйлатмалла. Кирлĕ пулсан çынсене тивĕçлĕ канашсем, укçа-тенкĕ парса е ĕç тупма пулăшмалла».

Общество членĕсен йышĕнче Хусан университечĕн профессорĕсемпе студенчĕсем те пулнă. Вĕсем тĕрлĕ лекци, калаçу ирттернĕ. Эрех-сăра сиенĕ çинчен «Дятель» журналпа хаçат та кăларса тăнă, кĕнекесем пичетленĕ. Августăн 29-мĕшĕнче урă пурнăçпа пурăнакансен уявне ирттернĕ. 1896 çулхи февраль уйăхĕнче общество комитечĕ алкоголиксене сиплемешкĕн ятарласа больница уçма йышăннă. Малтанлăха унта арçынсен валли 3-5 койка пулнă. Каярахпа хĕрарăмсем валли те уçнă. Малтанхи çулах лечебницăна 27 койка таран пысăклатнă. Ку вăл Раççейри çавнашкал чирпе тертленекенсене сыватмашкăн ятарласа уçнă чи пирвайхи больница шутланнă. Сиплев курсĕ 2-3 уйăх çурă тăснă. Унта ĕç меслечĕпе те (пахчара ĕçлесси, атă-пушмак юсасси) усă курнă. 1902 çултан пуçласа больница çумĕнче амбулатори йĕркипе сиплессине кĕртнĕ.

Каярах общество уставĕнче республикăри районсемпе уессенче тата хуласенче унăн уйрăмĕсене йĕркелеме палăртнă.

## Патшалăх пулăшăвĕ

**?** **Нумай ачаллă çемье çурт-йĕр условисене лайăхлатма патшалăхран мĕнле пулăшу илме пултарать?**

**Валентина КИРИЛЛОВА. Комсомольски районĕ.**

Çемье çула çитмен пилĕк е ытларах ача çитĕнтерет, кил-йыш çурт-йĕр условийĕ тĕлĕшпе нушаланать пулсан тӳлевсĕр çурта тивĕçме ирĕк пур – норма тăрăх кашни çынна 18 тăваткал метр кирлĕ.

Çурт-йĕрлĕ пулас тесен вырăнти администрацире черете тăмалла. Çемье ăна 3-5 çул кĕтет. Çакă пĕтĕмпех нумай ачаллă çемьесем валли çурт-йĕр тума çулсерен мĕн чухлĕ укçа-тенкĕ хывнинчен килет.

Çула çитмен виçĕ е ытларах ачаллă çемьесем пурнăçра пĕр хутчен çĕр лаптăкĕ илме пултараççĕ:

– çурт-йĕр хăпартма;
– дача валли;
– хушма хуçалăха аталантарма.

Кун пек чухне çак йĕркене асра тытмалла: виççĕмĕш (е ун хыççăнхи) ача 2011 çулта е каярах çуралнă пулсан, çемье çĕр лаптăкĕ тивĕçмешкĕн тӳрех заявлени çырма пултарать. Енчен те ачасем 2010 çулта е маларах кун çути курнă пулсан çемьен хăй пурăнакан вырăнта çурт-йĕр условине лайăхлатма черете тăмалла.

Виçĕ е ытларах ачаллă çемьесен федерацин «Çурт-йĕр» ятарлă программипе килĕшӳллĕн социаллă тӳлев илме ирĕк пур. Паллах, сăмах çемьери çула çитмен ачасем пирки пырать. Сăмахран, асли 18 çулта пулсан ăна «ача» шутĕнчен кăлараççĕ. Çавна май çăмăллăха тивĕçеймест. Енчен те заявление маларах (аслă ача 18 çул тултариччен) pană пулсан, ун пек чухне вăл списокрах юлать, çăмăллăха тивĕçет.

## Тăлăх сăмах чĕлхерен таталтăр

Хальхи вăхăтра республикăри 721 çемьере 1099 усрав ача пурăнать. 1949 ачана 1661 çемьере опека майĕпе пăхаççĕ. Вĕсенчен 225-ĕшне çемьесене кăçал панă.

Тăлăх, ашшĕ-амăшĕн хӳтлĕхĕсĕр юлнă ачасем çĕршывра пулмалла мар. Пурин те çемье ăшшине туйса çитĕнмелле. Çак ыйту тавра калаçнă та Раççей Правительствин пуçлăхĕн çумĕ Ольга Голодец ертсе пынă канашлура. Вăл видеоконференци мелĕпе иртнĕ. Пирĕн республикăран унта Иван Моторин премьер-министр хутшăннă.

Ольга Голодец палăртнă тăрăх – Раççейри нихăш регионра та тăлăхсен шучĕ ӳсни çук. Апла патшалăх политикине пурнăçлассипе субъектсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Паянхи кун çĕршывра 92 пин ытла тăлăх ача, çулталăк вĕçленнĕ тĕле çак кăтарту пĕчĕкленмелле.

Пирĕн республикăра та унашкал ачасен шучĕ çулсерен чакать. Тĕслĕхрен, ача çурчĕсенче тата шкул-интернатсенче пурăнакансен йышĕ юлашки çулсенче икĕ хут пĕчĕкленнĕ. Çемьесенче тĕрлĕ майпа воспитани илекенсен шучĕ кăçалхи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 90,1 процента çитнĕ.

Çакă ача çурчĕсемпе интернатсен йышне чакарма май панă. Паян республикăра 3 ача çурчĕ, 8 ятарлă шкул-интернат, сывлăх енчен хавшакраххисем валли сывлăх сыхлавĕн тытăмĕнче 2 ача çурчĕ тата социаллă хӳтлĕх тытăмĕнче 1 интернат çурчĕ ĕçлеççĕ.

## Улатăрсемпе Шăхасансем пуянланнă

Ноябрĕн 7-мĕшĕнче республикăра икĕ çĕнĕ ача сачĕ уçăлнă. Улатăр районĕнчи Чуварлейри 80 ачана йышăнма хатĕр. Канаш районĕнчи Шăхасанти вара 92 ачана вырнаçтарма пултарать. Пĕчĕккисене аталанма пулăшакан пӳлĕмсем хăтлă, тĕрлĕ йышши хатĕр-хĕтĕр те пур.

Кăçал пĕтĕмпе 14 ача сачĕ уçăлмалла. Вĕсен пĕр пайĕ ĕçлеме тытăннă, юттисем çулталăк вĕçлениччен хута каймалла.

## Хуçа çĕре ĕçлеттертĕр

Уйри çĕр лаптăкне хыт хура пусса ан илтĕр тесен унăн чăн хуçи пулмалла. Ял хуçалăх пĕрлешĕвĕ тĕп хуçа ирĕк парсан кăна хуçаланма пултарать ун çинче. Хуçа пулма çĕр илнĕ çыннăн хăйĕн пайне саккунпа харпăрлăха çыртармалла. Унашкал кăмăл çук тăк, унпа вырăнти самоуправлени саккун ыйтнă пек усă курать.

Республикăри Пурлăх министерствинчен пĕлтернĕ тăрăх – ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрĕн 343,4 пин гектарне хальлĕхе (кăçалхи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне) харпăрлăха илнĕ. Çакă пĕтĕмĕшле пай çĕрĕн 63 процентĕпе танлашать.

Ку тĕлĕшпе республикăра пилĕк район аван ĕçлесе пырать. Вĕсенчи кăтарту 75 процентран иртнĕ. Тĕслĕхрен, Шăмăршă районĕнче – 85 (15,9 пин га), Тăвайра – 86 (17,3 пин га), Елчĕкре – 85 (27,3 пин га), Канашра – 84 (28,1 пин га), Пăрачкав районĕнче – 79 процент (28,5 пин га).

Хуçисем тупăнман çĕр пайĕсен лаптăкĕ 233,4 пин гектара çитнĕ. Вырăнти муниципалитетсем çак лаптăкăн 87,9 пин ытла гектарне харпăрлăха илнĕ. Канаш (13,6 пин га е 100 процент), Елчĕк (4,8 пин га е 100 процент), Комсомольски (3,6 пин га е 77 процент), Шăмăршă (4,2 пин га е 70 процент), Тăвай (6,8 пин га е 65 процент) районĕсем ку тĕлĕшпе пуринчен лайăх тăрăшни курăнать.

Харпăрлăха çыртарнă çĕр пайĕсен шучĕпе Канаш районне çитекенни çук: унта 7790 çĕр пайне шута илнĕ.

**Ирина ПАВЛОВА.**

---

**Ĕмĕр сакки**

# 100 çулти салтак



**Пирĕн республикăра çын вăтамран миçе çул пурăнать? Чăвашстат кăтартăвĕсем тăрăх – 2013 çулта этем ĕмĕрĕ 70,8 çулпа танлашнă. Арçынсем хĕрарăмсенчен нумайрах пурăнни вăрттăнлăх мар. Раççей шайĕнче акă 2012 çулта хĕрарăм ĕмĕрĕ 1990 çулпа танлаштарсан пĕр çулталăк тăсăлнă. Арçыннăн улшăнман. 22 çул каяллахи пекех юлнă, урăхла каласан – 63 çул.**

**Хальхи вăхăтра Раççейре вăрçă-харçă пымасть, пурнăçа юратса пурăн та пурăн! Анчах те пурăнма пĕлместпĕр, те ытти-хыттине чухламастпăр – çĕр çула çитме ĕмĕтленместпĕр те. Сайра пулин те хĕрарăмсем пурăнса çиткелеççĕ-ха çав вăхăта, арçынсем ку енчен вăйсăртарах. Çавăнпа Вăрнар районĕнчи Санарпуçĕнче пурăнакан Михаил Платонович Платонова (Солдатова) "хĕрлĕ кĕнекене" кĕртме те çылăх мар. Виçĕ вăрçă вут-çулăмĕ витĕр тухса вăл сывă юлнă. Иртнĕ эрнере, ноябрĕн 6-мĕшĕнче, шăп та лăп 100 çул тултарчĕ.**

### Финсемпе, нимĕçсемпе, яппунсемпе

Виçĕ вăрçă тенĕрен уçăмлатсах каламалла пулĕ. Çар хĕсметне 1938 çулта лекнĕ Михалан малтанах финсемпе тытăçма тивнĕ. 1939-1940 çулсенче Совет Союзĕпе Финлянди хушшинчи хирĕçтăру историре юлнине пĕлетпĕрçке. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче мĕн чухлĕ юн юхнине аса илтерме кирлĕ мар. Берлина илсессĕн пирĕн çарсен 1945 çулта яппунсене парăнтарма лекнĕ. Çак вăрçă-харçăсен çулĕпе утса тухнă та Михаил Платонович. "Мĕнле сывă юлнă-ши?" – тесе тĕлĕнетĕр пулĕ. Ун патне çитмелле тесен хам та çул тăршшĕпех тĕлĕнтĕм. Курса калаçрăм та – лăплантăм. "Манран вилĕм хăранă, çавăнпа вăрçăран тухса тарнă", – çурма шӳтлесе хуравларĕ ватă салтак. Чăнласа вара: "Турă упранă пулĕ", – терĕ. Упрасçă Турă пĕрлех çӳренĕ-тĕр, анчах ху çивĕч те вăрвар пулмасан вăл та упраса çитереймест-çке-ха. Чăннипех те маттур пулнă çав чăваш каччи.

Ашшĕсĕр çитĕннĕ вăл. Лешĕ Пĕрремĕш тĕнче вăрçине тухса кайнă чухне Михала амăшĕн варĕнче выртса юлнă. "Ывăл çуралсан Михала ят хур. Михаил Платонович пултăр. Хĕр пулсан ху пĕлнĕ пек ят пар", – хытарса хăварнă упăшки арăмне, ахăртнех, хăй каялла таврăнмасса сиссе. Амăшне пулăшса ывăл ача мĕн пĕчĕкрен утă та çулнă, вутă та çурнă, пахча та чавнă. Килте йыш пулманран пысăк ĕçсене çемьен нимелле тума тивнĕ, тăван, пускил пулăшнă. Наянланма, кахалланма вăхăт пулман.

Чĕлхем вĕçĕнчен вĕçерĕнсе тухнă "кахал" сăмаха илтсессĕн Михаил Платонович кулсах ячĕ. "Ку сăмаха калама та намăс", – терĕ. Кахал-наян мĕнне пĕлсе çитĕнмен çав унăн ăрăвĕ. Хăрама-шикленме те пĕлмен. Унсăрăн вăл темиçе вăрçăран чĕрĕ тухайĕччĕ-ши?

### Кабинăра – Солдатов, хыçра – "Катюша"

Шăпăр-шăпăр тăкăнакан пульăсем ун пуçĕ çийĕн пайтах вĕçсе иртнĕ. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче Михаил Платоновича "Катюша" машина шанса панă. Ялта чухне шофера вĕренни пулăшнă ăна. Пултаруллă та çивĕч йĕкĕте асăрхамасăр та май килмен.

"Катюша" питех те хăрушă хĕçпăшал пулнă, пĕр установка çинчи 16 снаряд çурăлсан çĕр çинче нимĕн те юлман. Тен, шăпах ăна пула çĕнтерни те фашистсене. "Пульăсем йĕри-тавра ши те ши! шăхăраççĕ, тӳпе кĕрлесе тăрать. Машинăна малтан мала илсе каймалла. Руле мĕнле алăран яратăн? Хăрама та пĕлмен", – аса илет çĕр çула пурăнса çитнĕ салтак.

Йывăр сурансем те пулман вĕт тесен ăна мăшăрĕпе ачисем пӳлчĕç те иртнине аса илтерчĕç. Аманман мар, паллах, Михаил Платонович, анчах уйăхĕ-уйăхĕпе госпитальсенче выртман. Акă вăл пĕр саманта аса илчĕ. Тавралăх вăрçă шавĕпе кĕрлесе тăнă чухне аллине пуля лекнĕрен пĕр пӳрни руль çумне çыпçăнсах ларнă.

"Катюшăпа" Солдатов уйрăлми туссем пулнă. Фронтăн питех те кăткăс вырăнне çитмелле чухне яланах унăн ятне асăннă. Унăн машини кирек хăш вăхăтра та çула тухма хатĕр тăнă.

Яппунсен "банзай" сăмахĕ вырăсла мĕне пĕлтернине Михаил Платонович хăйĕн 100 çулхи юбилейĕнче кăна пĕлчĕ. Вырăссем атакăра "ура" сăмахпа малтан мала талпăннă пулсан, яппунсем кун пек чухне "банзай" тесе кăшкăрнă. Яппунсемпе вăрçнă чухне Михаил Солдатов разведчиксен ротинче çапăçнă. Вичкĕн куçлă, çивĕч ăс-тăнлă чăваш пĕррехинче яппунсем хăйсене çавăрса илме шут тытнине чухласа илнĕ те полк командирне пĕлтернĕ. Часах тревогăпа полка ура çине тăратнă, атакăна тухнă. Яппунсенчен тараканни тарнă, ыттисене пирĕн çар малалла иртме паман. Тĕттĕмре пĕр яппунĕ хăйĕн патне йăпшăнса пынине темле майпа асăрхама ĕлкĕрнĕ Михала. "Ара ман вилĕм вĕт ку", – вĕлтлетнĕ пуçĕнче. Лешĕ "банзай" тесе кăшкăрса янă та Михалана пăшалпа тĕлленĕ. Чăваш маххă паман, маларах пенĕ.

Вăрçăра та пурнăç хăй еккипе пырать çав. Темĕн те илтме тивет. Пĕррехинче уйрăм командирĕ Михалана: "Чуваш – свинья" тесе лаплаттарса хунă. Мĕншĕне Михаил Платонович паян кун та тавçăраймасть. Çак сăмахсем унăн чĕрине вирлĕн пырса тивнĕ. Полк командирĕпе туслă пулнăран юлташла çакăн çинчен ăна пĕлтернĕ. Кăшт вăхăтран аслă ертӳçĕ хăйĕн патне иккĕшне чĕннĕ те уйрăм командирĕнчен: "Эсĕ çапла каланă-и?" – тесе ыйтнă. Лешĕ туннă. Хăйне кӳрентерекене Михала полкра текех курман.

### Чĕрĕ, шухă, çивĕч пул тата итле

Вăрçăра аптăраманскере тăван ялĕнче те асăрханă. Кунта унăн пурнăçĕ каллех машина рулĕ умĕнче иртнĕ. 40 çул ытла колхоз ертӳçисене турттарнă. Вăрçă хыççăнхи çулсенче машина сахал пулнă. Пĕрремĕш "ЗИС-6" машинăна Михаил Платонович Мускава хăй кайса илнĕ. Инçе çула каймалла чухне ялта тӳрех Михалана тилмĕрнĕ. Пĕлекен çынпа çула тухнинчен лайăххи мĕн пултăр.

Нумай курнă, нумай пĕлнĕ çав. Фашистсене парăнтарса Берлина çитсен рейхстаг стени çине: "Сын чуваша Михаил Платонович Солдатов здесь был", – тесе кирпĕч татăкĕпе çырса хăварнă.

Паспорт çинче унăн хушамачĕ Платонов, анчах мĕн тивĕçлĕ канăва тухиччен Михаил Платонович Солдатов хушаматпа çӳренĕ. Чунпа та салтак пулма тăрăшнă.

"Чĕрĕ, шухă, çивĕч пулмалла", – тет Михаил Платонович. Мăнукĕсене те (мăшăрĕпе Мария Яковлевнăпа паян вĕсем 3 ачипе, 11 мăнукĕпе, 15 кĕçĕн мĕнукĕпе тата кĕçĕн мăнукĕн 1 ачипе мухтанма пултараççĕ) çавнах вĕрентет. Тата командирсене итлемелле тет. Хăй вăл нихăçан та тавлашман, хирĕçсе айăпа кĕмен. Эрех-сăрапа айкашман, чĕлĕм туртман, юратнă мăшăрĕпе вăрçăнса пурăнман. Ăстăнĕ паянхи кун та çивĕч.

Сăмах май, Мария Яковлевна та вăрçăра зенитчица пулнă. Санарпуç ял тăрăхĕнче вăрçа хутшăннисем иккĕшĕ кăна тăрса юлнă. Тепĕр икĕ çултан вĕсем мăшăрланнăранпа 70 çул çитет.

Çавăнпа мĕншĕн пурăнас, ырришĕн ĕмĕтленес мар? Пĕчĕк чухне хулари лавккара пулнине ниепле те манма пултараймасть салтак. Хырăм выçă. Çăкăр татăкне чĕĕтсе çинине асăрханă сутуçă. "Сан хырăм выçă-и?" – тесен ача тунман. Арçын вăл ăçтан тата кам ачи пулнине ыйтса пĕлнĕ. Михала ашшĕпе Пĕрремĕш тĕнче вăрçинче пĕрле çапăçнă иккен вăл. Вара ачана тăраниччен çитернĕ.

Паян пурăнма йывăр-и? Вăл вăхăтринчен темиçе хут çăмăл. Мĕнле пурăнассин йăлт хамăртан килет.

**Ирина НИКИТИНА.**
**Сергей ЖУРАВЛЕВ сăнӳкерчĕкĕ.**



# Анаткас

Çĕрпӳ районĕнчи Ямаш ял тăрăхне кĕрекен Анаткас ялĕ Шупашкартан 57 çухрăмра вырнаçнă. Кунта тĕпрен илсен чăвашсем пурăнаççĕ: ĕлĕкрен çĕр ĕçĕпе ĕçлеççĕ, выльăх-чĕрлĕхпе аппаланаççĕ. XX ĕмĕр пуçламăшĕнче ялта шыв арманĕ ĕçленĕ. 1930 çулта «Красная Армия» колхоз йĕркеленĕ. 2005 çулта – «Заря». 1795 çулта Анаткасра 25 кил хуçалăхĕ пулнă; 1859 çулта – 11 кил хуçалăхĕ, 26 арçынпа 44 хĕрарăм пурăннă; 1926 çулта – 35 кил хуçалăхĕ, 82 арçын, 90 хĕрарăм; 1939 – 90 арçын, 101 хĕрарăм; 1979 – 52 арçын, 83 хĕрарăм; 2002 – 45 кил хуçалăхĕ, 86 çын: 41 арçын, 45 хĕрарăм; 2014 – 51 кил хуçалăхĕ, 101 çын шутланса тăрать.

Ялта тĕпрен илсен ватăсем пурăнаççĕ. «Эх, вырăнта ĕç çукки пĕтерет-çке. Ирĕксĕрех ĕç шыраса урăх регионсене тухса кайма тивет», – тет çак ялта пурăнакан Геннадий Ананьев.

**Сергей ЖУРАВЛЕВ сăнӳкерчĕкĕсем.**



Галина Евдокимова



Римма Любимова



Геннадий Ананьев



Ольга Григорьева



Роза Сергеева

## АХ, АНЧАХ...

### Вăрман куçлă

Тăвай районĕнче йывăçа саккунсăр майпа каснăшăн вырăнти вăрманçăна айăпланă.

Вăрмар районĕнчи суд 51 çулти Юрий Емельянов тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçе тĕпчесе пĕтернĕ ĕнтĕ.

2013 çулхи январь уйăхĕнче çак арçын саккунпа килĕшӳсĕр ултă çынна Тăвай вăрманлăхĕнче чăрăш касма ирĕк панă. Çавна май ЧР Çут çанталăк министерствине 76 пин ытла тенкĕлĕх сиен кӳнĕ.

Çав çулхинех май уйăхĕнче тепĕр çынна йывăç касма ирĕк панă. Ку хутĕнче те çак арçыннăн йывăç касмашкăн нимĕнле документ та пулман. ЧР Çут çанталăк министерствине 46 пин ытла тенкĕлĕх шар кăтартнă.

Унсăр пуçне 2013 çулхи май уйăхĕнчех пĕр гражданин тĕлĕшпе административлă йĕркене пăсни çинчен суя протокол çырса хатĕрленĕ.

Республика прокуратурин хирĕçлевĕ тăрăх – гражданина административлă яваплăх тыттарни çинчен калакан йышăнăва пăрахăçланă.

Следстви вăхăтĕнче Юрий Емельянов хăйĕн айăпне пĕтĕмпех йышăнман. Суя протокол йĕркеленине хирĕçленĕ. Анчах та суд ларăвĕнче айăпа йышăнма тивнĕ. Çавна май тăкака кăштах саплаштарнă. Ӳкĕннине шута илсе суд Емельянова 1 çул та 4 уйăха условлă майпа ирĕкрен хăтарнă.

### Çăмăл укçа пуçа хыçтарать

Республика прокуратури наркотик хатĕрлемешкĕн вăрттăн лаборатори йĕркеленĕ преступниксен ушкăнĕ тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçе суда ярса панă. 25-36 çулсенчи çамрăксене наркотик хатĕрсен саккунсăр производствишĕн, вĕсене сутма хăтланнăшăн айăплаççĕ.

Следстви палăртнă тăрăх – 2013 çулхи сентябрь-октябрь уйăхĕсенче çак ушкăна кĕрекен çамрăксем Шупашкарта тара тытнă хваттерте амфетамин (психотроплă япала) хатĕрлеме тытăннă. Вĕсенчен виççĕшĕ ăна тĕп хулара вырнаçтарма палăртнă. Анчах та вĕсен усал шухăшне Наркотĕрĕслев сотрудникĕсем татнă.

Следовательсемпе сотрудниксем преступниксене тăрă шыв çине кăларас тĕлĕшпе чылай тăрăшнă: лаборатори хатĕрхĕтĕрĕпе хими япалисене, наркотик хатĕрĕсемпе психотроплă япаласене туртса илнĕ, саккунсăр майпа йĕркеленĕ лаборатори ĕçне чарса лартнă.

Пакунлисем преступниксенчен 110 грамм психотроплă япала (кунтах амфетамин та пур) тата 133 грама яхăн марихуан туртса илнĕ. Çамрăксем вĕсене наркăмăшсене улăштарас тĕллевпе тупса палăртман çынсенчен илнĕ.

Ĕçе Шупашкарти Калинин район судне пăхса тухма панă.



# «Мĕнпе» мар, «кампа» мухтан

**Ачисем йышлă пулнăран ырми-канми ĕçлеме тивнĕ Зверевсен. Тепĕр чухне çывăрма та вăхăт юлман. Колхоза тухса утиччен сакăр ачана (шел, пĕри пĕчĕклех пурнăçран уйрăлнă) тăрантарма кăмакаран кунсерен вĕри çăкăр пĕçерсе кăларма ĕлкĕрнĕ. Çавăнпа Зверевсем ирхине 3 сехетрех ура çинче пулнă. Республикипе палăрнă Петр Зверев осеменатор кама пăхнă тетĕр-и? Ĕçчен ашшĕпе амăшĕнчен тĕслĕх илсе ӳснĕ. Комсомольски районĕнчи Вутлан ялĕнче пурăнакан, "Рассвет" хуçалăхра тăрăшакан специалист кăçал республика шайĕнче иртнĕ професси ăсталăхĕн конкурсĕнче çĕнтерсе Чăваш Ен чысне Раççей шайĕнче хӳтĕленĕ. Чи вăйлисем хушшинче пуçласа пĕрремĕш пулни пурнăçра сайра тĕл пулать.Инçетрен вăл паха опытпа таврăннă, çитес çул е виçмине çакă ăна, тен, хисеп картлашки çине хăпарма та пулăшĕ.**



Сергей Журавлев сăнӳкерчĕкĕ.

Кун çинчен пултаруллă специалистпа калаçăпăр-ха. Унччен маларах сăмах пуçарма тата темиçе сăлтав пур. Чӳк уйăхĕ Петр Зверевăн ашшĕпе амăшĕшĕн пит пĕлтерĕшлĕ. 61 çул пĕрле килĕштерсе пурăнаççĕ вĕсем. "Пирĕн çуртра харкашу-çапăçу пулман, халĕ те лăпкă, шăпăрт", – тет кил хуçи хĕрарăмĕ, çичĕ ача амăшĕ Елизавета Васильевна. 13 мăнук, мăнукĕсен 6 ачи Зверевсен йăхне малалла тăсаççĕ. Аслашшĕн, кукашшĕн Василий Петровичăн Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине "хӳринчен" тытма тивнине те пĕлеççĕ.

1944 çулхи чӳк уйăхĕнче 17-ри Васлейĕн салтак ячĕ тухать. Кăшт вăхăтран ăна Германие мар, Инçет Хĕвел тухăçне яраççĕ. Ăнланмалла, фашистла Германие парăнтарасси паллă пулнă. Пирĕн çарсем майĕпен яппунсемпе кĕрешме çула тухнă. 1945 çулта Инçет Хĕвел тухăçĕнче чăваш каччи хăватлă çар техникинчен уйрăлман. Инçете перекен оруди 30-35 тонна тайнă. Унăн пăрăхĕн шăтăкĕнчен Васлейĕн пуçĕ çăмăллăнах кĕрсе тухма пултарнă. Унта 50-60 килоллă снарядсем чиксе яппунсем пытаннă вырăнсене пенĕ. Пĕр оруди патĕнче 14-15 салтак тăрăшнă. Васлей пушкăна снарядсемпе тивĕçтерекенсен йышĕнче пулнă. Яппунсен вут-çулăмне хирĕç пĕррехинче виçĕ машина снаряд пĕтерме тивнĕ. Алă вĕççĕн çĕкле-ха вĕсене! Юнлă çапăçусене, пĕр самантра вуншар салтак пурнăçĕ татăлнине курма тивмен пулин те Васлей вăрçă тутине чухласа илме ĕлкĕрнĕ.

Германие те çитнĕ. 1946 çулта хăнăхнă çар орудипе унăн чаçне шăпах унта куçараççĕ. "Америка Германие пайласран сыхланас тĕллевпе янă пире. Германин çур территорине Америка хăй ярса илесшĕн пулнă", – тет вăрçă ветеранĕ. Апла-и е капла-и, анчах Германире Василий Петровичăн 1951 çулчченех юлма тивет. 7 çул службăра тăнă салтак вăл вăхăта лайăх ас тăвать. Культура шайĕ унта çав тери пысăкчĕ тет.

Ялан çар техникипе юнашар çӳренĕ каччăшăн мĕн çывăх пултăр? Паллах, трактор. Анчах туй тумалăх укçа пуçтарма тракторпа пайтах ĕçлемелле. Пулăшакан çук. Ашшĕ тата пиччĕшĕ вăрçăран таврăнайман. Ытти пиччĕшĕсемпе аппăшĕсен хăйсен çемье çавăрмалла. Тĕнче курнă чăваш çамрăкĕ геологсен ушкăнĕпе уран шырама Таджикистана тухса каять. Канавсем чавать, çапла майпа чулпа пĕрле уран тухнă. Тепĕр çул та çаплах тăвать. Вара çитĕ тет те 1953 çулта авланать.

20 çулти Лисук унăн мăшăрĕ пулса тăрать. Вăрманхĕрри Чурачăка Васлей тăтăшах çӳренĕ. Ытахальтен мар: Лисукăн аппăшне куç хывнă вăл малтанах. Каччă инçетрен таврăниччен лешĕ качча тухать. Васлей хыççăн хĕрсем пайтах чупнă-мĕн. Вăл вара йĕркеллине, кăмăла кайнине суйланă. Улахра Лисука килĕштернĕ.

Мăшăрлантăн пулсан – çурт ларт. Çемье пуçĕ Казахстана çерем уçма кайса килет. Ĕçлесе илнĕ тырăпа Зверевсем çурт хăпартаççĕ. Унтанпа çурт темиçе хут та çĕнелнĕ. Паян пурăнаканнине кĕçĕн ывăлĕ Петĕр тунă.

Виçĕ ывăлĕ ялта, иккĕшĕ Çĕпĕрте, икĕ хĕрĕ Шупашкарта пурăнаççĕ. Ачисенчен чылайăшĕ яла таврăнас шухăшлă. Хĕрĕсем тивĕçлĕ канура ĕнтĕ. Вĕсенчен пĕри çурт лартма тытăннă та. Çĕпĕрти ывăлĕ те яла килесшĕн. Ялти пурнăç йывăр тетпĕр, анчах терт-нушана сахал мар тӳснĕ аслă Зверевсен ĕмĕрĕ мĕне кура вăрăм-ши? Çемье пуçĕ кăрлач уйăхĕнче 88 çул тултарать, мăшăрĕ 82-е пуснă. Ĕç тытса тăрать мар-и пире пурнăçра? Тăхăр теçеткене çывхаракан Василий Петрович эпир çитнĕ чухне шăмшакне кăмака çинче ăшăтса выртмастчĕ. Килти хуçалăхра кроликсенчен уйрăлаймасть-мĕн, вĕсене тăрăшса пăхать. Çакна пире Зверевсен Светлана кинĕ пĕлтерчĕ.

Лисук аппана та лавккана вăштăрвăштăр утнă чух тĕл пултăмăр. Епле правур калаçать тата! "Сирĕн мăшăр хăвăртан паттăртарах пек курăнать", – шӳтлесе тĕксе илтĕмĕр çемье пуçлăхне. "Ара, эпĕ çамрăкрах вĕт", – тӳрех хурав тупăнчĕ хĕрарăмăн. Çав хушăрах хушса хучĕ: "Пĕр-пĕрне тарăхни пулнă пулĕ пурнăçра, анчах асар-писер çапăçса курман, упăшка ман çине алă çĕклемен. Вăл мана сăмахпа та вăрçман. Хам ăна калакаланă". Ĕçкĕпе иртĕхмен, пирус туртман Зверевсем. Ачисем те çаплах. Тепĕр чух пурнăç тупсăмне шырама хăтланатпăр, мĕнре-ши пуянлăх тетпĕр? Тупсăмĕ ансат – ырăпа пурăнсан, ĕçлĕ пулсан кирли çитсе пырать.

**Ирина НИКИТИНА.**

АСТĂВĂМ

# Сӳнмест, ялкăшать Куснар çути

## (Иван Вашки çуралнăранпа – 100 çул)

Вăхăт иртет, вăхăт вĕçет. Тăван халăх пурнăçĕпе кун-çулне чĕре патĕнчи ăшă сăмахсемпе шурă хут çине ӳкерекен çыравçă вара – ĕмĕр вилĕмсĕр, ĕмĕр-ĕмĕр чĕрĕ. Иван Вашки ячĕ те çаплах – халăх асĕнче.

Иван Никифорович Никифоров (Вашки) 1914 çулхи ноябрĕн 7-мĕшĕнче Куславкка районĕнчи Çӳлти Куснар ялĕнче вăтам хресчен кил-йышĕнче çуралнă. Ялти ултă çул вĕренмелли тата Елчĕкри колхоз çамрăкĕсен шкулĕсенче пĕлӳ илнĕ. Ачаран таврари çут çанталăк пуянлăхĕпе, Энĕшпе Атăл илемĕпе киленнĕ, сăвăсем çырнă. Унăн малтанхи сăввисемех чун-чĕрене çупăрласа ачашлаççĕ. Ял çумĕнчи анасем çинче пурçăн çивĕтлĕ йĕтĕн хумханса ларни те сăвăç чунне хытă хускатнă, «унăн ешĕл хумне хирĕç пуç тайтарнă». Çак сăвăсем çамрăк хĕрӳлĕх тапса тăнипе, ĕçпе кĕрешӳре малта пыма чĕннипе, сăнарлă илемĕпе палăрса тăраççĕ.

Çамрăк сăвăç самана уттипе пĕр тан утма тăрăшнă. «Пурнăç карапĕ» çав çулсенче «хум-штурмра ишнĕ». Пĕтĕм халăх пĕрремĕш пилĕкçуллăх стройкисенче вăй хунă, йывăр индустрин капмар предприятийĕсем, пĕлĕте шăтарса, çӳлелле кармашнă. Мĕн тери хĕрӳ тапхăр! «Пурçăн çилхеллĕ, ылтăн хумлă тухăçлă тыр-пул ӳстерме, хăйĕн чăнчăн телейне хресчен пĕрлешӳллĕ хуçалăхра тупма пултарасса Иванюк çирĕп ĕненнĕ. Çавăнпа пĕрлех вăл иртнĕ пурнăç «кивĕ суха касси айне» выртса юлнине ырланă.

1933 çулта Иван Вашки Шупашкарти театр техникумне вĕренме кĕрет. Тепĕр пысăк савăнăç та пулнă: çав çулах унăн хăй пекех тата 4 çамрăк авторпа пĕрле кăларнă «Малтанхи парне» кĕнеке тухать. Вĕреннĕ хушăрах вăл Чăваш çамрăкĕсен театрĕ лартакан спектакльсенче вылянă. Хулари çыравçăсемпе паллашнă, сăвăсем çырнă. Халĕ унăн поэзири сасси те çирĕпленет: шухăшĕ те анлă, кашни сăмах хăйĕн вырăнне тупать.

Техникум хыççăн 1936-1938 çулсенче Иван Вашки Хĕрлĕ Çарта пулать. Çартан таврăнсан пĕр хушă театртра ĕçлет, часах ăна «Çамрăк большевик» хаçат редакцине ĕçлеме чĕнсе илеççĕ. Çак çулсенче вăл çарпа патриотизм темине çутатакан сăвăсем хайлать. Вĕсенчен уйрăмах «Краснофлотецсен юрри», «Чапаев», «Мучи концертра», «Юлташ» сăввисене палăртмалла. Вĕсем çĕршыври çутă пурнăçа юн тăкса, вут-çулăмра çунса çĕнсе илни çинчен калаççĕ, Тăван çĕршыва паттăррăн хӳтĕлеме чĕнеççĕ.

1940 çулта Иван Вашки Мускаври А.В.Луначарский ячĕллĕ театр институчĕ çумĕнчи чăваш студине вĕренме кĕрет. Вăл ку вăхăтра ятлăсумлă сăвăç ĕнтĕ, тепĕр кĕнеке кăларма хатĕрленет. Çапах та манăн çакăнта кĕскен çеç Иван Вашкин çепĕç лирик туйăмне палăртакан йĕркесене кăтартассăм килет.

Ирхи сывлăм йăлтăрккан  
Курăкра кĕмĕлленет.  
Пуç тӳпинчи тăрăхран  
Тăри кайăк тĕр тĕрлет.  
Янкăр пĕлĕт кăн-кăвак.  
Хăпарма тимлет хĕвел...

Акă тата «Асамат кĕперĕ» сăвăран илнĕ темиçе йĕрке:

«Атăл урлă хĕлĕх картăм», –  
Тет чăваш çынни çакна.  
Кĕпере асра хăвартăм  
Сӳниччен сăна-сăна.

Шăнăçми пек ӳсрĕ шелĕм,  
Асамат çухалнăçем.  
Ăнтăхса çапла тинкертĕм –  
Ма час çĕтрĕ ку илем?

Сăвăç пейзаж ăсти, сăнарлă та хитре ӳкерчĕксем тăвать. Вулакана çут çанталăк илемне асăрхама вĕрентет.

Шел, театр студийĕ çумĕнчи чăваш студийĕнче çулталăк та вĕренеймест Иван Никифорович. Нимĕç фашисчĕсем Мускав патне çывхарса пыраççĕ, вăл каллех салтак шинелĕ тăхăнать. Фронтра – артиллери взвочĕн командирĕ. Тăшмана каялла хăвалама пуçласан, ăна Мускава, салют паракансен ушкăнĕнче çар тивĕçĕсене пурнăçлама куçараççĕ. Кунта вăл И.В.Сталинпа паллă маршалсемпе генералсене тĕл пулать. Унăн асаилĕвĕсем питĕ интереслĕччĕ.

Вăрçă хыççăн Иван Вашки журналистика ĕçне таврăнать – «Ялав» журналăн яваплă секретарĕ пулать. Унтан ăна К.В.Иванов ячĕллĕ чăваш патшалăх академи драма театрне актерта ĕçлеме чĕнсе илеççĕ... 1950-1952 çулсенче партин Чулхулари шкулĕнче вĕренет. Çак çулсенче вăл ытларах драматурги енĕпе ĕçлет. Сцена саккунĕсене пĕлекенскер 1946 çулта икĕ пьеса – «Пăрлă пĕлĕт айĕнче» (Стефан Геймăн «Заложники» романĕн сюжечĕпе) тата «Салют хыççăн» (тепĕр варианчĕ «Хурама çулçи мĕн пăшăлтатать-ши?») драмăсем çырать.

«Пăрлă пĕлĕт айĕнче» драма фашистсен ылханнă пусмăрĕ айĕнче чех халăхĕ хăрушă асап тӳснине кăтартса парать. Фашизма нихçан та пуç çĕклеме памалла мар, вăл этемлĕхе чуралăхпа вилĕм кăна кӳрет. Ăна тӳрех таптаса лапчăтмалла. Çак шухăша уçăмлăн фашизма йĕрĕнсе питлет автор.

«Хурама çулçи мĕн пăшăлтататать-ши?» драма – Иван Вашки пултарулăхĕнче паллă вырăн йышăнакан произведени. Кунти ĕçсем Аслă Çĕнтерӳ кунне, Гитлер вăрă-хурахĕсене аркатса тăкни çинчен пĕлтерсе, Мускавра тупăсемпе персе хăватлă салют панине, вăрçăн пĕтĕм терт-нушине тӳссе ирттернĕ совет халăхĕн çутă савăнăçне аса илтереççĕ. Драмăра Архипов лейтенант сăнарĕ – асра юлакансенчен пĕри. Ырă кăмăллă, вашават офицер вăрçăра çапăçнă, аманнă. Çĕнтерӳ кунĕнче Мускавра салют пама хутшăннă. Çарти хĕсметре хăй телейне тупнă, тупăсене çĕнетсе лайăхлатма шутлать, хăйĕн теори пĕлĕвне ӳстерме политехника институчĕн профессорĕсем патне çӳрет, аспирантурăра вĕренме ĕмĕтленет.

Хаяр тĕрĕслев çулĕсем хыççăн поэзие те пăрахман Иван Вашки. Вăл хăйĕн сăввисенче халăхсен çирĕп туслăхĕ, тăшманпа паттăррăн çапăçнă фронтовиксем çинчен («Манми кунсем», «Йывăр экзамен», «Герой палăкĕ» т.ыт.те.) çырчĕ. Вырăс поэчĕсен сăввисене чăвашла куçарчĕ, юрату теми те тивĕçлĕ вырăн тупрĕ. Çапах та вăл ытларах проза жанрĕпе ĕçлерĕ. Унăн вун-вун калавĕнчен Иван Никифоровичăн «Ĕмĕре тăракан пĕр кун» автобиографиллĕ калавне палăртас килет. 1941 çулхи ноябрĕн 7-мĕшĕнче Хĕрлĕ площадьри парада хутшăнса унтан тӳрех Мускава хӳтĕлеме тухса кайни писатель-патриотшăн нихçан манăçми кун ĕнтĕ. Çак калавра Хĕрлĕ площадьре пулса иртнĕ çар парадне куç умне яр уççăн тухса тăмалла çырса кăтартнă.

Иван Вашки нумай çул хушши Чăваш кĕнеке издательствинче, обллитра редакторта, «Тăван Атăл» журналăн яваплă секретарĕнче ĕçлерĕ. Вăл 2011 çулта çĕре кĕнĕ.

«Пурăнан пурнăçра йăнăш туман çын сахал пулĕ, – тенĕччĕ вăл мана 90 çула çитес умĕн. – Лайăх-и, япăх-и – эпир пурăнкаласа ирттертĕмĕр. Мĕн туни çумне хушма та, кăларса ывăтма та май çук ĕнтĕ. Эпир тăван халăх ырлăхĕшĕн ĕçленĕ. Мĕн курмаллине веçех курнă пулас. Хура тарпа хĕрлĕ юн мĕнне те пĕлетĕп. Çитĕнекен ăрусем вĕсене ан курччăр. Уйрăмах вăрçă хăрушлăхĕнчен Турă упратăр. Çамрăксем эпир тунă йăнăшсене ан туччăр. Курманни нумай пулать, мĕнлерех-ши тăван Куснар çутисем?»

Сӳнмест, ялкăшать Куснар çути, Иван Никифорович!

**Герман ЖЕЛТУХИН.**

# Хисеплĕ Вулаканăмăр!

Эс пĕлен: «Хыпар» Издательство çурчĕн кунçулĕнче çĕнĕ тапхăр пуçланчĕ. Вăхăт пире çĕнĕлле пурăнма, çĕнĕлле ĕçлеме хистет. Эпир сан шанчăкна тÿрре кăларма тăрăшăпăр, эс вара пирĕн кăларăмсене тархасшăн, çырăнсам.

**«Хыпар»: Вулаканăм, пĕр çулпа утар!**

| Кăларăмсем | Индекс | Почта уйрăмĕсенче | «Чăваш пичет» киоскĕсенче | «Советская Чувашия» киоскĕсенче | Редакцире |
|---|---|---|---|---|---|
| Хыпар | 54800 | 732,66 | 288 | 279 | 144 |
| Хыпар-шăматкун | 78353 | 304,08 | 150 | 141 | 90 |
| Çамрăксен хаçачĕ | 54804 | 358,08 | 234 | 231 | 144 |
| Чăваш хĕрарăмĕ | 11515 | 325,08 | 222 | 213 | 141 |
| Сывлăх | 11524 | 205,02 | 114 | 111 | 81 |
| Кил-çурт, хушма хуçалăх | 54806 | 184,04 | 114 | 111 | 81 |
| Хресчен сасси | 54838 | 376,62 | 168 | 162 | 114 |
| Хресчен сасси–кил | 43887 | 184,08 | 108 | 105 | 81 |
| Тăван Атăл | 11529 | 319,08 | 252 | 246 | 198 |
| Капкăн | 24608 | 185,04 | 150 | 126 | 108 |
| ЛИК | 83429 | 140,36 | 120 | 120 | 100 |
| Тантăш | 54802 | 274,08 | 138 | 132 | 90 |
| Самант | 73208 | 181,02 | 162 | 156 | 120 |
| Тетте | 73771 | 143,52 | 114 | 111 | 90 |


ĂСТИ ЕПЛЕ – ĔÇĔ ÇАПЛА

# Пил сăмахĕ – ĕмĕре



«Алла тĕрĕ тытмасан кун ахаль иртнĕн туйăнать, – тет Елчĕк районĕнчи Аслă Елчĕкри Галина Тимофеева. – Пуçланă ĕçе хăвăртрах вĕçлес килет. Тĕрленĕ май хамăн ĕçпе киленетĕп».

Çыхма-тĕрлеме ачаранах хăнăхнă вăл. Амăшĕ Мария Адюкова питĕ ĕçчен те пултаруллă хĕрарăм пулнă. Хĕрĕсене пĕчĕкренех ал ĕçне вĕрентнĕ. Ку тĕлĕшпе хăй те пиларнă. «Пăлтăрта çакăнса тăракан Ромеопа Джульеттăна аппасемпе тăваттăн пĕрле тĕрлерĕмĕр, – аса илет иртнине Галина Ивановна. – Пурте шур пире йĕппе тирнĕ».

Ку тĕрĕ ăна шухă ачалăха, çамрăклăха аса илтерет. Вăл темрен те хаклăрах уншăн. Çавăнпа паянхи кунччен стена çинче çакăнса тăрать. Тăван килĕ питĕ çывăх хĕрарăма. Ахальтен мар хăй вăхăтĕнче Елчĕкри хваттерне пăрахса яла куçнă вăл. «Кунта хама йăпанмалăх пахча та пур, чăх-чĕп те тытатăп», – терĕ Галина Тимофеева. Ашшĕ-амăшĕ хăйсен ĕмĕрĕнче тăвата çурт лартнине пĕлтерчĕ. Иккĕшĕ те вырăнти хуçалăхăн сысна ферминче ĕçленĕ. Пилĕк ача çуратса ÿстернĕ вĕсем, ура çине тăратнă. Сăмах май, ывăлĕ Виталий Адюков – паллă юрăç. Ашшĕ-амăшĕн çуртне паян Галина Ивановна тирпейлесе пурăнать. Аппăшĕсемпе шăллĕне ырă сунса кĕтсе илет, ăсатать. Тăван кил-çурт ăшши упраннишĕн, унăн алăкĕ хупăнманнишĕн савăнаççĕ пĕр тăвансем, Галинăна тав тăваççĕ.

Пĕчченех пурăнать вăл. Тĕрĕ тĕрлесе йăпанать. Ытларах ятарлă схемăпа тĕрлет. Вĕсене лавккара туянать. Юлашки вăхăтра турăшсем тĕрлеме тытăннă. Ку тĕлĕшпе ăна Александр атте пил панă. «Вĕсене тĕрленĕ май чунра çăмăллăх туятăп, – пĕлтерет Галина Ивановна. – Сутмастăп, тус-тăвана, юлташсене парнелетĕп».

Хăйĕн ĕçĕсене районти, ялти куравсене тăратать Хальлĕхе ятарлă выставка йĕркелемен. Тен, малашне тĕллевĕ пурнăçланĕ.

Юрлама та кăмăллать хĕрарăм. Ку енĕпе те амăшĕ ăста пулнă. Чылай юрă парнелесе хăварнă вăл ачисене. Халĕ вĕсене Виталий Иванович та шăрантарать. Унсăр пуçне Аслă Елчĕкри «Сăрнай» ушкăн та. Фольклор ансамбльне çÿрекенсем районти, республикăри мероприятисене яланах хутшăнаççĕ.

Унта-кунта концертпа кайма – пурте куç умĕнче. Икĕ-виçĕ чăваш кĕпи çакăнса тăрать пÿлĕмре. Пурте сцена çине тухмаллисем. «Кĕпе-тумтир ытларах арчаран тухать. Аннен тепĕр 4 кĕпе пур. Вĕсемпе те усă курасшăн», – кăмăллăн сăмахларĕ хĕрарăм.

Амăшĕн тĕррисене те, тумтирне те упрать вăл. Кун çути панă чи çывăх сăнара чĕрере тытать. Унăн юррисене «чĕртсе» халăх умне кăларать. Çакăнтан ырри урăх нимĕн те çук.

**Валентина ПЕТРОВА.**
**Автор сăнÿкерчĕкĕ.**

ЧĂВАШ НАЦИ ТЕЛЕКУРАВĔН ЭРНЕЛĔХ ПРОГРАММИ

**Тунтикун, ноябрĕн 17-мĕшĕ**

18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ЫЛТĂН ÇӲПÇЕРЕН» (6+)
19.00 «КАÇХИ ТĔЛПУЛУ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «ТАКИЕ ЖЕ» (12+)
20.30 «ОТКРЫТЫЙ РЕГИОН» (12+)
20.45 «АКИЛБУПСЕР» (6+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
21.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)

**Ытларикун, ноябрĕн 18-мĕшĕ**

6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ЫЛТĂН ÇӲПÇЕРЕН» (6+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
19.00 «ÇĔР ТИВЛЕЧĔ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «КОМФОРТНЫЙ ГОРОД» (12+)
20.30 «ПРАВОВОЕ ПОЛЕ» (12+)
20.45 «АКИЛБУПСЕР» (6+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА

**Юнкун, ноябрĕн 19-мĕшĕ**

6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ЯЛАН ЯНРА, ЧĂВАШ СĂМАХĔ» (0+)
19.00 «КИЛ ĂШШИ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «КАЧЕСТВО» (12+)
20.30 «ОДИН ДЕНЬ С ПРОФЕССИОНАЛОМ» (12+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
21.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)

**Кĕçнерникун, ноябрĕн 20-мĕшĕ**

6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ЯЛАН ЯНРА, ЧĂВАШ СĂМАХĔ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ÇАВРА СĔТЕЛ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «ЗНАКОМЫЕ ЛИЦА» (12+)
20.30 «ЗАКОНОДАТЕЛИ» (12+)
20.45 «АКТУАЛЬНОЕ ИНТЕРВЬЮ» (12+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА

**Эрнекун, ноябрĕн 21-мĕшĕ**

6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ЧĂВАШ ХАЛĂХ ЮМАХĔСЕМ» (0+)
19.00 «ЭХ, ЮРРĂМ, ЯНĂРА!» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «БУХТЫ-БАРАХТЫ» (6+)
20.30 «АКТУАЛЬНОЕ ИНТЕРВЬЮ» (12+)
21.00 «ПОШЕПТУШКИ»
21.15 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
21.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)

**Шăматкун, ноябрĕн 22-мĕшĕ**

6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ЧĂВАШ ХАЛĂХ ЮМАХĔСЕМ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
9.00 «ТАРÇĂ» ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (16+)
17.00 «ОТКРЫТЫЙ РЕГИОН» (12+)
17.30 «ТАКИЕ ЖЕ» (12+)
17.45 «ОДИН ДЕНЬ С ПРОФЕССИОНАЛОМ» (12+)
18.00 «ÇАВРА СĔТЕЛ» (12+)
18.30 «ЖЕМЧУЖИНКИ ЧУВАШИИ» (12+)

**Вырсарникун, ноябрĕн 23-мĕшĕ**

9.00 «СПОРТ ДЛЯ ВСЕХ» (12+)
9.30 «ВРЕМЯ ВКУСА» (12+)
9.45 АКТУАЛЬНОЕ ИНТЕРВЬЮ» (12+)
10.00 «КУБОК РОССИИ ПО ВОЛЬНОЙ БОРЬБЕ СРЕДИ ЖЕНЩИН НА ПРИЗЫ ГЛАВЫ ЧУВАШИИ». ТЕЛЕВЕРСИЯ (16+)
17.00 «ВРЕМЯ ВКУСА» (12+)
17.30 «ЭХ, ЮРРĂМ, ЯНĂРА» (12+)
18.00 «ПЕХИЛ» (12+)
18.30 «ЯШ ЧУХ, ÇАМРĂК ЧУХ»
19.00 «ПĔРРЕХИНЧЕ 20 ÇУЛ ИРТСЕН». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (12+)

## УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ

| Число, кун | | Ноябрь, 12 – юнкун | Ноябрь, 13 – кĕçнерникун | Ноябрь, 14 – эрнекун | Ноябрь, 15 – шăматкун | Ноябрь, 16 – вырсарникун | Ноябрь, 17 – тунтикун | Ноябрь, 18 – ытларикун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХĔВЕЛ | тухать | 7.21 | 7.23 | 7.25 | 7.27 | 7.29 | 7.31 | 7.33 |
| | анать | 15.48 | 15.47 | 15.45 | 15.43 | 15.41 | 15.40 | 15.58 |
| Кун тăршшĕ | | 8.27 | 8.24 | 8.20 | 8.16 | 8.12 | 8.09 | 8.05 |
| УЙĂХ | тăхри | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать |
| | кунĕ (12 сехет тĕлне) | 20-мĕш кун | 21-мĕш кун | 22-мĕш кун | 23-мĕш кун | 24-мĕш кун | 25-мĕш кун | 26-мĕш кун |
| | | Рак паллинче | Арăслан паллинче | Арăслан паллинче | Хĕр паллинче | Хĕр паллинче | Хĕр паллинче | Тараса паллинче |

## КУЛЬТУРА ÇУЛТАЛĂКĔ

# Аваллăха упраса, малашлăха ĕненсе

**Шкул çумĕнче музей йĕркелени çав тери меллĕ. «Аваллăхсăр малашлăх çук», – теççĕ халăхра. Çамрăк ăрăва иртнĕ кун-çулпа паллаштарма шăпах музей кирлĕ. Çичĕ хут илтиччен пĕрре курни ĕмĕрлĕхех асра юлать.**

### Мамонт асав шăлĕ те, савăт-сапа та

Аслă Елчĕкри вăтам шкул çумĕнче историпе краеведени музейĕ ĕçлет. Ăна 1949 çултах йĕркеленĕ. Пуçарса яракансем – ЧАССР тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ Радость Спиридоновнăпа Петр Алексеевич Печковсем. Паян унăн ĕçне Надежда Зиновьевна Хушкина йĕркелесе пырать.

Хальхи вăхăтра кунта 2189 экспонат упранать, вĕсенчен 1820-ĕшĕ – чăннисем (подлинниксем).

Икĕ пайран тăракан музейра аваллăха, ялта колхоз йĕркеленĕ тапхăра, вăрçă çулĕсене, сумлă та маттур çынсене, тискер чĕр чунпа кайăк-кĕшĕке сăнланă. Мĕн кăна çук кунта! Авалхи савăт-сапаран, тумтиртен пуçласа бизон пуç шăммипе майраки, мамонт асав шăлĕ таранах. Паллах, экспонатсене пухма шкул ачисемпе пĕрлех ял халăхĕ те тăрăшнă. Çут çанталăк кĕтесĕнче пăши те пур.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче хутшăннă çынсене халалласа ятарлă стенд хатĕрленĕ. Шел, юнлă вăрçă хирĕнчен таврăннисенчен паян пĕри çеç сывă. Вăл – Петр Алексеевич Печков. Аслă Çĕнтерӳ 70 çул тултарнине халалласа вĕренекенсем тĕрлĕ реферат хатĕрлеççĕ. Çавăн пекех фронтра пуç хунă аслашшĕ-кукашшĕ вил тăприне тупас тĕллевпе шырава хутшăнаççĕ.

Аслă Елчĕкре ятлă-сумлă çын чылай çуралса ӳснĕ. Вĕсен шутĕнчех ветеринари наукисен кандидачĕ Анатолий Шаков, ветеринари наукисен докторĕ Федор Петрянкин, РФ тава тивĕçлĕ çар летчикĕ Иван Теньков, Петр Катайкин полковник, Геннадий, Анатолий тата Зинон Волковсем (пĕр тăвансем).

### Ячĕ – халăх асĕнче

Анатолий Никандрович – медицина наукисен докторĕ, профессор, Зинон Никандрович – ЧАССР тава тивĕçлĕ тухтăрĕ, Геннадий Никандрович вара – педагогика наукисен докторĕ, профессор. Пĕр килтен хисеплĕ виçĕ çын тухни сайра çĕр çинче. Туслă, ĕçчен, пархатарлă кил-йышра çеç çакнашкал ачасем çитĕнеççĕ.



Волковсене халалласа шкулта музей уçнă. Ан тив, хальлĕхе пысăках мар вăл. Çавăнпах пулĕ ăна «Волковсен музейĕн пӳлĕмĕ» ят панă. Кунта вĕсен килĕнчи япаласем, документсем Геннадий Никандровича хисеплесе панă парнесем, вăл ашшĕ-амăшĕ патне янă çырусем упранаççĕ.

«Музее уçма шкул директорĕ Николай Малышкин нумай тăрăшрĕ, – терĕ Надежда Хушкина. – Геннадий Никандрович пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрălса кайнă хыççăн йĕркелерĕмĕр ăна. Вилес умĕн пĕр-икĕ уйăх маларах яла килсе кайрĕ вăл, пил пачĕ. Ялйышпа сывпуллашма килнĕнех туйăнчĕ. Хамăр та куççульпех ăсатрăмăр ăна. Арçынсене хĕрарăма хисеплеме сунчĕ. «Хĕрарăм – Турăпа пĕр тан», – терĕ пил парса».

Кăçал Геннадий Никандрович çуралнă кунне халалласа шкулта чăваш халăх юррисемпе йăлийĕркисен фестивальне ирттернĕ. Унта пĕтĕм вĕренекен хутшăннă. 1-4-мĕш класра вĕренекенсем чăваш халăх юррисене шăрантарнă. Чăваш халăх йăли-йĕркипе вара вăтам тата аслă ӳсĕмрисем паллаштарнă: вĕсем салтак ăсатнине, вăйăа тухнине, улах ларнине сăнланă. Надежда Зиновьевна каланă тăрăх – малтанлăха шкулта çеç иртнĕ вăл. Каярахпа унăн ахрăмĕ районĕпе, тен, республикипех саланĕ.

Аслă Елчĕксем ентешĕпе савăнма, мухтанма пĕлни хавхалантарать. Тĕнчипе паллă çынна çакăн пек чысламалла та. Унăн ячĕ ĕмĕрех халăх асĕнче упранĕ.

**Валентина ПЕТРОВА.**
**Елчĕк районĕ.**

## ХĂРУШЛĂХ




ЧР прокуратури право хуралĕн, патшалăх влаçĕн тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе пĕрле ноябрĕн 17-мĕшĕнчен тытăнса декабрĕн 17-мĕшĕччен "Вилĕм ăçта сутнине пĕлтер!" акци йĕркелет. Тĕллев – наркотиксен кăна мар, психоактивлă мĕнпур хутăшăн, çав шутра туртмалли хутăшсен саккунсăр çаврăнăшне пӳлесси.

Акци вăхăтĕнче республика прокуратуринче, ЧР Шалти ĕçсен министерствинче тата Наркотĕрĕслев управленийĕнче шанăç телефонĕсем ĕçлеççĕ, вĕсемпе шăнкăравласа тата электрон почтипе наркотиксемпе ăçта усă курни, ăçта сутни çинчен анонимлă майпа пĕлтерме пулать. Унсăр пуçне ял-хулара çакнашкал пĕлтерӳсене пухмалли ешчĕксем вырнаçтарнă. Калăпăр, Шупашкарта – "Каскад", "МТВ-Центр" суту-илӳ центрĕсенче, "Шупашкар" пасар территорийĕнче, ЧР прокуратурин çуртĕнче, хула администрацийĕнче, Юстици çуртĕнче, Тĕп автовокзалта, "Салют" культура керменĕнче, "Ача-пăча тĕнчи" лавкка патĕнчи пĕлтерӳсен хăми çинче. Çакнашкал ешчĕксем ытти çĕрте те пулĕç, граждансем унта яракан пĕлтерӳсене прокуратура ĕçченĕсем илĕç. Мĕнпур пĕлтерĕве регистрацилеççĕ, вĕсем тăрăх тĕрĕслев ирттерессине прокуратура органĕсем сăнаса тăрĕç. Республика прокуратури пурне те пĕрлехи инкеке хирĕç çĕкленме чĕнет. Пирĕн ачасен, тăвансен, сывăх çынсен пурнăçĕпе сывлăхĕ хăрушлăха лекме пултарать-çке – çакна манас марччĕ.

**Наркотик сутакан вырăнсем çинчен анонимлă майпа пĕлтермелли телефон тата электрон почтин адресĕ: 8-937-013-93-41 prokur@cap.ru**

**Хĕрӳ лини телефонĕсем: ЧР прокуратури – 39-20-12, Наркотĕрĕслев – 23-01-00, ЧР Шалти ĕçсен министерстви – 24-16-55**

## РЕКЛАМА, ПĔЛТЕРӲСЕМ

### ПРОДАЮ

**2. АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89674704677.

**3. АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89674704677.

**6. Навоз, торф, чернозем, бой** кирпича, песок, гравмассу с доставкой. Т. 8-903-346-07-13.

**618. Косилки,** грабли, **фрезы,** опрыскиватели, **погрузчики** на МТЗ. **ДОСТАВКА!** Тел.: 8-937-955-98-02, 8-937-375-80-95.

## САЛАМЛАТПĂР!



Юратнă аттене – Комсомольски районĕнчи Висьпӳрт ялĕнче пурăнакан Николай Григорьевич КУЗНЕЦОВА – çуралнă кун ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Вăрăм ĕмĕр, иксĕлми телей сунатпăр. Эс пурришĕн эпир савăнатпăр, санпа мухтанатпăр. Ĕмĕрĕмĕр ачусен тата мăнукусен пархатарне курмалла пултăр.

*Эс пирĕншĕн пĕртен-пĕрре*
*Çакă аслă, çутă тĕнчере.*
*Ан чирле, ан ватăл нихăçан,*
*Хĕвел пек пул эс пирĕншĕн ялан.*



**Хĕрĕсем, ывăлĕсем, кинĕсем, кĕрӳшĕсем тата мăнукĕсем.**

«ХРЕСЧЕН САССИ»
Обществăпа политика хаçачĕ
Индекс 54838
Учредительсем – Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви, Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăйтытăмлă учрежденийĕ

ДИРЕКТОР-ТĔП РЕДАКТОР – В.В. ТУРКАЙ
Редактор – Е.Н. НИКОЛАЕВА (тел. 56-34-63)
Редакципе издатель адресĕ: Шупашкар, И. Яковлев пр., 13.
Телефонсем: директор-тĕп редактор – 56-00-67, тĕп редактор çумĕ – 62-04-54, пайсем – 56-34-63, 62-50-06, 28-86-68, реклама пайĕ тел./факс – 28-83-70. Факс (8352) 62-50-06

www.hypar.ru,
e-mail: atal-volga@mail.ru

Хаçата 2013 çулхи раштав уйăхĕн 10-мĕшĕнче Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсемпе массăллă коммуникацисен сферинчи саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан службин Чăваш Республикинчи управленийĕ ПИ ТУ 21-00305[1] регистрациленĕ.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă хатĕр оригинал-макетран «Чăваш ЕН» ИПК» ПУП типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар, И. Яковлев пр-чĕ, 13.

Графикпа 17 сехетре алă пусмалла.
17 сехетре алă пуснă.
Заказ 4315
Тираж 4323

* Рекламăпа пĕлтерӳсем. Реклама тексчĕсемпе пĕлтерӳсемшĕн вĕсене паракансем яваплă.